Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1938 ЙАНВАР 15 ШАМАТКУН 12 (4825)-мӗш №

ЧӐВАШ КОММУНӖ

20-мӗш ҫул тухать ● ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Тӗпӗҫтӑвкомӗн хаҫачӗ ● Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСӖ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторӑн 0—67
Ред. заместителӗн 0—88
Редакци секретарӗн 4—40
Дежурнӑйӑн 6—23

ССР Сойуз Аслӑ Совечӗн пӗрремӗш Ҫессийӗ

Социалисӑм ҫӗршывӗнчи влаҫӑн чи аслӑ органӗ

Кремљре ССР Сойуз Аслӑ Совечӗн пӗрремӗш Ҫессийӗ уҫӑлчӗ,—Аслӑ Совета пӗтӗм совет халӑхӗ пурне те тивӗҫ, пӗртан тата тӳрех суйламала правапа вӑрттӑн сасӑласа суйларӗ. Рабочисемпе хресченсен тӗнчери пӗрремӗш социалисӑмлӑ государствинчи влаҫӑн чи аслӑ органӗ хӑйӗн прависене пурнӑҫа кӗртме тытӑнчӗ. Социалисӑмӑн ҫӗнӗ ҫӗнтерӳвӗсемшӗн, хамӑрӑн аслӑ тӑван ҫӗршыв чапӗшӗн тунӑ совет парламенчӗ ӗҫе тытӑнчӗ!

Сойуз Совечӗпе Национаљнӑҫсен Совечӗн ӗҫӗн пирвайхи кунех ССР Сойузӗнчи халӑхсен морађлӗ тата политикӑлӑ пӗрлӗхне уҫҫӑн кӑтартса пачӗ. Халӑх суйласа йанӑ депутатсем Аслӑ Советӑн пӗрремӗш депутачӗпе Сталин йулташпа, партипе правительствӑ руководителӗсемпе тӗлпулни нихҫан манми асра йулӗ. Ҫак тӗлпулу вӑл ССР Сойузӗнчи халӑхсем партин Сталинла Тӗп Комитечӗпе Совет правителстви тавра пӗтӗҫнине кӑтартса паракан калама ҫук вӑйлӑ демонстраци пулчӗ.

Аслӑ Советӑн икӗ палати те хӑйсен государствӑ ӗҫне тума аслӑ тимлӗхпе тата ӗҫченӗн тытӑнчӗҫ. Тимлӗх, ӗҫченлӗх, мӑнаҫланманни—пирӗн совет парламенчӗн чи уҫӑ паллисем, унӑн, Аслӑ Советӑн, хамӑрӑн аслӑ социалисӑмла державӑ пурнӑҫӗн чи тӗп, чи паха ыйтувӗсене ӑсларан та ӑслӑн, Ленинла—Сталинла ӑслӑлӑхпа татса памала.

Капиталисӑмла ҫӗршывсенче парламент вӑл—халӑп ҫапакансене вађђи, буржуази адвокачӗсене вађђи арени, йанкипе влаҫа хӑйсен аллинче тытакансен—капиталиссемпе помешчиксен тӗрлӗрен вӑрттӑн махинацийӗсене витсе тӑракан хӳтӗ. Пирӗн совет парламенчӗ—чӑннипех ҫӗршыври государствӑ влаҫӗн чи аслӑ органӗ, вӑл халӑхпа тӑванӑн тачӑ сыхӑнса тӑрать, халӑхӑн интересӗсемшӗн ӗҫлет. ССР Сойуз Аслӑ Совечӗн икӗ палатинче те—тӑван ҫӗршывӑн чечекӗсем, унӑн чи лайӑх сыннисем. Вӗсен пурнӑҫӗнче халӑхӑн телейӗшӗн ӗҫлессисӗр пуҫне урӑх тӗллев ҫук.

Депутатсем халӑхпа тӑванӑн тачӑ сыхӑнса тӑни чи ватӑ депутатсем—пысӑк ученӑй Алексей Николайевич Бах тата ватӑ бољшевик Миха Цхакайа,—вӗсене Сойуз Совечӗн тата Национаљнӑҫсен Совечӗн ларувӗсене уҫма шанчӑк хурса пысӑк хисеп тунӑ,—калана умсӑмахсенче те паларса тӑчӗ. Аслӑ Совет халӑхпа ҫавӑн пек тӑванӑн сыхӑнса тачӑ тӑни палатӑсенче—Сойуз Совечӗн председателне А. А. Андрейев депутата, Национаљнӑҫсен Совечӗн председателне Н. М. Шверник депутата, вӗсен заместителӗсене, вӗсен йачӗсене каласан тата суйласан та палӑрчӗ. Аслӑ Совет халӑхпа ҫавӑн пек тӑванӑн тачӑ сыхӑнса тӑни ӗнер Сойуз Совечӗ тата Национаљнӑҫсен Совечӗ Комиҫҫисене суйланӑ кашни депутатӑн йатӗнче паларса тӑрать.

ССР Сойуз Аслӑ Совечӗн творчествӑлӑ государствӑ ӗҫӗ пуҫланчӗ. Ҫессӑ пысӑк пахалӑхлӑ ыйтусене сӳтсе-йават. Халӑх—государствӑн чи паха ӗҫӗсене тунӑ чухне пур плуссемпе минуссене те шута илмеле тесе—пана сталинла наказа хисепре тытса, икӗ палатӑ та ыйтусене тӗплӗн тӗпчесе вӗренме йалан ӗҫлекен комиҫҫисем суйларӗҫ: саккунсем хатӗрлекен комиҫҫисене, бӳджет комиҫҫисене тата йутҫӗршыв ӗҫӗсен комиҫҫисене. Ҫессин пит пысӑк пахалӑхлӑ конституцилӗ ыйтусене сӳ се-йавмала, Аслӑ Совет Президиумне суйламала, ССР Сойузӗн Правителствине—Халӑх Комиссарӗсен Совечӗне туса хумала, ССР Сойузӗн Прокурорне уйӑрса лартмала пулать.

ССР Сойузӗн Аслӑ Советӗнче, Сталинла Конституципе пӗтӗмпех шайлӑн, никам пӑсайми принцип—икӗ палатӑ пӗртанлӑхӗ пурнӑҫа кӗрсе пырать. Буржуалӑ государствӑсенче „аслӑ" тата „кӗҫӗн" палатӑсем пур,—унта аслӑ палатӑн тӗллевӗ—ишеркке буржуалӑ „демократийе" те пӗтерсех хурасси пулать. Пирӗн ҫӗршывра пӗтӗмпех урӑхла—пирӗн икӗ палатӑ та пӗртан правалӑ, вӗсем иккӗшӗ те пӗрпекех халӑхӑн интересӗсемшӗн ӗҫлеҫҫӗ. Пӗтӗм Сойузри Советсен Чрезвычайлӑ VIII-мӗш Сйесӗнче Сталин йулташ ҫапла каларӗ:

„Пирӗн ССР Сойузӗнчи мӗнпур ӗҫҫыннисен, вӗсен национаљнӑҫнемӗнне пӑхмасӑр, пӗтӗмӗшлӗ интересӗсене паларса тӑракан аслӑ орган пур. Вӑл—Сойуз Совечӗ. Анчах ССР Сойузӗнчи национаљнӑҫсен, пӗтӗмӗшлӗ интересӗсемсӗр пуҫне, тата нацилӗ уйрӑмлӑхӗсемпе сыхӑнса тӑракан хӑйсен уйрӑм, спецификӑлӑ интересӗсем пур. Ҫав спецификӑлӑ интерессене хисепе хумасӑр хӑварма йурать-и? Ҫук, йурамасть. Кирлӗ-и, шӑп ҫав спецификӑлӑ интерессене паларса тӑма йатарласа тунӑ аслӑ орган? Сӑмах та ҫук, кирлӗ. Пӗр иккӗлену те пулма пултараймасть, ССР Сойузӗ пек нумай нацилӗ государствӑна ҫавӑн пек органсӑр тытса пыма май пулмӗччӗ. Ҫавӑн пек орган вӑл—иккӗмӗш палатӑ, ССР Сойузӗн Национаљнӑҫсен Совечӗ".

Сойуз Совечӗн тата Национаљнӑҫсен Совечӗн ӗнерхи ларувӗсем икӗ палатӑн депутачӗсен, хамӑрӑн аслӑ тӑван ҫӗршыври мӗн пур халӑхсен хӑватлӑ пӗрлӗхӗпе ирӗкне паларса тӑракан депутатсен, ирӗкӗсем, туртӑнӑвӗсем, тӗллевӗсем, кӑмӑлӗсем пӗрлӗхлине пит те лайӑх кӑтартса пачӗҫ.

ССР Сойуз Аслӑ Совечӗн улӑпла пысӑк ӗҫсене тумала пулать. Депутатсем вӗсене ӗҫре пӗтӗм совет халӑхӗ хӑватлӑн пулӑшнине туйса тӑраҫҫӗ. Ҫесси уҫӑлнӑ кун пӗтӗм ҫӗршывра халӑхӑн чаплӑ праҫникӗ пулса тӑчӗ. Халӑх шанса тӑрать—вӑл суйланӑ сынсем, коммуниссемпе партире тӑманнисен хӑватлӑ блокӗн депутачӗсем, хӑйсен суйлавҫисен наказне пурнӑҫа кӗртеҫҫӗ, ҫӗршыва малашне те хамӑрӑн социалисӑмла державӑн хӑватне ҫирӗплетес сталинла ҫулпа, халӑхӑн чи йышлӑ массисен пурнӑҫӗ малала лайӑхланса, културӑ малала ӳссе пырас ҫулпа илсе кайӗҫ.

Ӗҫҫыннисем пурте Кремљ ҫине тинкерсе пӑхаҫҫӗ,—унта ССР Сойузӗн Аслӑ Совечӗ ӗҫлет. Совет халӑхӗ хӑйӗн депутачӗсене ӑнӑҫлӑ ӗҫлеме ырӑ сунать. Халӑх хӑйӗн депутачӗсене ҫирӗп наказ парать: Ленинла—Сталинла сӑнарлӑ политикӑлӑ работниксем пулӑр, халӑх умӗнче тӳрӗ те тӗрӗслӗхлӗ пулӑр. Хамӑрӑн аслӑ тӑван ҫӗршывшӑн, коммунисӑм ӗҫӗшӗн пӗтӗм чӗререн тӑрӑр. Кӗрешӳре нимӗнрен хӑраман сынсем, халӑхӑн тӑшманӗсене шеллемен сынсем пулӑр. Троцкисла-бухаринла шпионсене аркатса тӗпӗ тымарӗпе тӑпӑлтарса пырӑр. Хамӑрӑн тӑван ҫӗршывӑн оборонине ҫирӗплетсе, унӑн тӑшманӗсене ҫӗр пичӗ ҫинчен шӑлса ывӑтса пырӑр.

Нимӗн иккеленмели те ҫук—халӑх хӑй суйланӑ сынсене пана ҫак сталинла наказа пӗтӗмпех пурнӑҫа кӗртӗҫ. Аслӑ Советӑн депутачӗсем пӗтӗмпех халӑхшӑн, Ленинӑн—Сталинӑн аслӑ партийӗн йалавӗпе пырса, социалисӑмӑн ҫӗнӗ ҫӗнтерӳвӗсене туса пырассишӗн ӗҫлесе пырӗҫ.

(„Правда" умстатйи, 1938 ҫулхи йанварӗн 13-мӗшӗ.)

Н. М. МАРЧАК депутат сӑмахӗ

— Депутат йулташсем, Национаљнӑҫсен Совечӗн Украинӑран, Дагестанран тата Белоруҫҫирен суйланӑ депутатсен ушкӑнӗ хушнипе, Саккунсем хатӗрлекен йаланлӑх Комиҫҫине тума сӗнӳ паратӑп. Ҫак Комиҫҫине тума кирлине, ӑпӗ кӑтартнӑ депутатсем ҫакӑнпа килӗшлесе параҫҫӗ: ССР Сойуз Конституцин 32-мӗш статйинче: „ССР Сойузӗн саккун кӑларакан влаҫне пӗртенпӗр ССР Сойузӗн Аслӑ Совечӗ анчах пурнӑҫа кӗртсе тӑрать" тесе каланӑ; Национаљнӑҫсен Советне, ҫавӑн пекех, Сойуз Советне те, пӑхса тухма тӑратакан мӗн пур саккунсене, малтан Комиҫҫисен сӳтсе-йавса хатӗрлемеле.

Епӗ, йулташсем, кунта мана тухса калама хушнӑ депутатсен ушкӑнӗпе пӗрле, Национаљнӑҫсен Совечӗн ҫакӑн пек йаланлӑх Комиҫҫине туни питӗ вырӑнлӑ, тесе шутлатӑп.

Сойуз Совечӗн 1938 ҫулхи йанварӗн 13-мӗшӗнче пулнӑ ларувӗ ҫинчен информацилӗ пӗлтерӳ

Йанварӗн 13-мӗшӗнче, кӑнтӑрла 11 сехетре, Сойуз Совет ларувӗсен залӗнче Кремљре Сойуз Совечӗн иккӗмӗш ларувӗ пулса иртнӗ.

Ларува йертсе пыракан председателӗ—Сойуз Совечӗн Председателӗ депутат **А. А. Андрейев.**

Пӗрремӗш ыйтупа Сойуз Совет Ҫессин кун йӗркинчи иккӗмӗш пунктне—Сойуз Совечӗн йаланлӑх Комиҫҫийӗсем ҫинчен пӑхса тухаҫҫӗ.

Депутат **Н. С. ХРУШЧЕВ** Мускав, Ленинград, Кийев тата Ташкент депутачӗсен ушкӑнӗнчен саккунсем хатӗрлекен Комиҫҫине туса хурасси ҫинчен сӗнӳ парать.

Сойуз Совечӗ саккунсем хатӗрлекен Комиҫҫи составне 10 сынтан ҫирӗплетет.

Комиҫҫи составне ҫак сынсене суйлаҫҫӗ:

1. Комиҫҫи председателӗ—**Дмитрий Матвейевич ЙЕВТУШЕНКО** — Кийев облӑҫӗнчи Белоцерковский округӗнчен суйланӑ депутат.

Комиҫҫи членӗсем:

2. **Александр Иванович УГАРОВ**—Ленинград хулинчи Смољнӑй округӗнчен суйланӑ депутат.

3. **Йулий Моисейевич КАГАНОВИЧ**—Горький—Сталинский округӗнчен суйланӑ депутат.

4. **Михаил Александрович ШОЛОХОВ**—Ростов облӑҫӗнчи Новочеркасский округӗнчен суйланӑ депутат.

5. **Петр Георгийевич МОСКАТОВ**—Ростов облӑҫӗнчи Шахтинский округӗнчен суйланӑ депутат.

6. **Усман ЙУСУПОВ** — Ташкент-Сталинский округӗнчен суйланӑ депутат, Узбек ССР.

7. **Ољгӑ Федоровна ЛЕОНОВА**—Мускав хулинчи Свердловский округӗнчен суйланӑ депутат.

8. **Фазыла Валиахметович ШАГИМАРДАНОВ** — Дуванский округӗнчен суйланӑ депутат, Башкир АССР.

9. **Афанасий Федорович Ковађов**—Витебский йал округӗнчен суйланӑ депутат, Белорус ССР.

10. **Валериан Минайевич БАКРАДЗЕ**—Кутаисский округӗнчен суйланӑ депутат, Грузин ССР.

Д. С. КОРОТЧЕНКО депутат Украинӑ, Мускав, Мускав облӑҫӗн тата Казахстан депутачӗсен ушкӑнӗ йачӗпе Сойуз Совечӗн Бӳджет Комиҫҫине туса хурасси ҫинчен пана сӗнӳве Сойуз Совечӗ йышӑнать.

Бӳджет Комиҫҫин составне 13 сынран суйлаҫҫӗ:

1. Комиҫҫи председателӗ **Иван Иванович СИДОРОВ—Мускав** хулинчи Октябӗрский округӗнчен суйланӑ депутат.

Комиҫҫи членӗсем:

2. **Алексей Николайевич ПЕТРОВСКИЙ**—Ленинград хулинчи Красногвардейский округӗнчен суйланӑ депутат.

3. **Александр Филиппович НИКАНОРОВ**—Архангељск хула округӗнчен суйланӑ депутат.

4. **Ураз Джанзакович ИСАЙЕВ**—Семипалатинский округӗнчен суйланӑ депутат, Казах ССР.

5. **Мамадали КУРБАНОВ**—Куљабский округӗнчен суйланӑ депутат, Таджик ССР.

6. **Афанасий Федорович КОВАЉОВ**—Витебский йал округӗнчен суйланӑ депутат, Белорус ССР.

7. **Николай Нилович БУРДЕНКО**—Мускав хулинчи Ростокинский округӗнчен суйланӑ депутат.

8. **Павел Константинович ЛЕГКОНРАВОВ**—Инҫет-Хӗвелтухӑҫ крайӗнчи Амур округӗнчен суйланӑ депутат.

9. **Клавдийа Ивановна НИКОЛАЙЕВА**—Калинин облӑҫӗнчи Кашинский округӗнчен суйланӑ депутат.

10. **Кулийев Теймур Имем Кули оглы**—Сабир-Абадский округӗнчен суйланӑ депутат, Азербайджан ССР.

11. **Сергей Йаковлевич ЖУК**—Куйбышев облӑҫӗнчи Чапайевский округӗнчен суйланӑ депутат.

12. **Турдыбиби ИСЛАМОВА**—Кокандский йал округӗнчен суйланӑ депутат, Узбек ССР.

13. **Иван Александрович ФЕСЕНКО**—Донецк облӑҫӗнчи Лисичанский округӗнчен суйланӑ депутат.

РСФСР, Украинӑ ССР, Белорус ССР тата Грузин ССР депутачӗсен ушкӑнӗ йачӗпе Л. П. БЕРИЙА депутат пана сӗнӳ тӑрӑх Сойуз Совечӗ Сойуз Совечӗн Йутҫӗршыв ӗҫӗсен Комиҫҫине туса хурасси ҫинчен постановлени йышӑнать.

Йутҫӗршыв ӗҫӗсен Комиҫҫи составне 11 сынтан суйлаҫҫӗ:

1. Комиҫҫи председателӗ — **Андрей Александрович ЖДАНОВ**—Ленинград хулинчи Володарский округӗнчен суйланӑ депутат.

Комиҫҫи членӗсем:

2. **Никита Сергейевич ХРУЩЧЕВ**—Мускав хулинчи Красно-Пресненский округӗнчен суйланӑ депутат.

3. **Лаврентий Павлович БЕРИЙА**—Тбилиси-Сталинский округӗнчен суйланӑ депутат, Грузин ССР.

4. **Лев Захарович МЕХЛИС**—Мускав облӑҫӗнчи Кунцевский округӗнчен суйланӑ депутат.

5. **Георгий Михайлович СТАЦЕВИЧ**—Инҫет-Хӗвелтухӑҫ крайӗнчи Хабаровск округӗнчен суйланӑ депутат.

6. **Александр Василийевич КОСАРЕВ**—Донецк облӑҫӗнчи Орджоникидзевский округӗнчен суйланӑ депутат.

7. **Борис Александрович ДВИНСКИЙ**—Ростов облӑҫӗнчи Таганрог округӗнчен суйланӑ депутат.

8. **Алексей Алексейевич ВОЛКОВ**—Гомељ хула округӗнчен суйланӑ депутат, Белорус ССР.

9. **Йулдаш АХУН-БАБАЙЕВ** — Андижанский округӗнчен суйланӑ депутат, Узбек ССР.

10. **Дмитрий Захарович МАНУИЛСКИЙ**—Акмолинский округӗнчен суйланӑ депутат, Казах ССР.

11. **Иван Федорович ФЕДЬКО**—Житомир округӗнчен суйланӑ депутат, Украинӑ ССР.

П. Г. МОСКАТОВ депутат Сойуз Совет Ҫессин кун йӗркинчи 7-мӗш пунктне—депутатсене хӑйсен депутат обйазаннӑҫӗсене пурнӑҫа кӗртнипе сыхӑнса тӑракан расходсене тӳлесси ҫинчен—пӑхса тухассине Сойуз Совечӗпе Национаљнӑҫсен Совечӗн пӗрлехи ларуне куҫарма сӗнӳ парать. Сойуз Совечӗ ку сӗнӳве йышӑнать.

Ҫакӑнпа Сойуз Совечӗн иккӗмӗш ларувӗ хупӑнать.

Сойуз Совечӗн 1938 ҫулхи йанварӗн 12-мӗшӗнче пулнӑ ларувӗ

Йанварӗн 12-мӗшӗнче Кремљри Аслӑ дворецӑн пысӑк залӗнче—Сойуз Совет ларувӗсен залӗнче—нумай мӗлйунлӑ совет халӑхӗ суйласа йанӑ сынсем, коммуниссемпе партире тӑманнисен никам ҫӗнтерейми блокӗ суйланӑ сынсем пуханнӑ.

Тӑватӑ сехет. Кӗтмен ҫӗртен тӑвӑллӑн алӑ ҫупма пуҫлаҫҫӗ. Пурте ложӑсем ҫине пӑхаҫҫӗ. Унта Сталин, Молотов, Калинин, Ворошилов, Каганович, Андрейев, Микойан, Чубарь, Косиор, Жданов, Йежов, Литвинов, Петровский, Шверник, Хрушчев, Булганин, Димитров т. ыт. йулташсем курӑнаҫҫӗ.

Халӑх шанса суйланӑ сынсем совет халӑхӗн пӗрремӗш депутатне—Иосиф Виссарионович Сталина—питӗ пысӑк хавасланӑхлӑ ҫӗкленӳпе кӗтсе илеҫҫӗ. Тӗрлӗрен чӗлхесемпе хытӑн та хаваслӑн кӑшкӑрса саламланисем темиҫе минут хушши тӑсӑлаҫҫӗ.

Ҫессийе ҫул тӗлӗшӗнчен чи ватӑ депутат, чи паллӑ совет учонӑйӗ Бах академик уҫать. Ӑна депутатсем хӗрӳлӗн саламлаҫҫӗ.

Бах академик совет ҫӗршывӗн ӗҫҫыннисен 20 ҫул хушшинче кӗрешсе илнӗ итогӗсем ҫинчен, Сталинла аслӑ Конституци ҫине сырса хунӑ социалисӑмӑн питӗ пысӑк ҫӗнтерӳвӗсем ҫинчен хумханулӑ калани Ҫесси пысӑк тимлӗхпе итлет.

Мускав, Ленинград тата Кийев депутачӗсен ушкӑнӗнчен Мускав Совечӗн председателӗ И. И. Сидоров депутат Сойуз Совет Председателне Ленин—Сталин парти ӗҫӗшӗн, пирӗн социалисӑмлӑ тӑван ҫӗршыври ӗҫҫыннисен ӗҫӗшӗн кӗрешекен ҫирӗп бореца, Сойуз Совечӗн депутатне, Политбӳро членне тата ПСК(б) Парти Тӗп Комитечӗн секретарне Андрей Андрейевич Андрейева суйлама сӗннине Ҫесси тӑвӑллӑн оваци туса саламлать. Сойуз Совечӗн Председателне пӗр сасӑпах Андрейев йулташа суйлаҫҫӗ.

Сойуз Совечӗн Председател заместителӗсене пӗр сасӑпах Трофим Денисович Лысенко тата Султан Сегизбайев йулташсене суйлаҫҫӗ.

Лысенко йулташ—Харьков облӑҫӗнчи хресчен ывӑлӗ, партире тӑмасть, академик, социалисӑмлӑ тӑван ҫӗршывшӑн паллӑ ӗҫсем тунӑшӑн ӑна Ленин орденӗпе награҙдӑланӑ. Лысенко академик Одессӑри селекципе генетикӑ ӑслӑлӑхпа тӗпчев институтне йертсе пырать.

Сегизбайев йулташ—Узбек ССР Республикӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн председателӗ. Ӑна, социалисӑмлӑ тӑван ҫӗршывӑн тӳрӗ ывӑлне, Узбекистан, Казахстан тата ытти республикӑсен халӑхӗсем те лайӑх пӗлеҫҫӗ.

Регламента, кун йӗркине йышӑннӑ тата Мандат Комиҫҫине суйланӑ хыҫҫӑн (Комиҫҫи председателне А. С. Шчербаков йулташа суйланӑ), Ҫессин пӗрремӗш ларуне хупнӑ тесе пӗлтереҫҫӗ. Ҫессири халӑх лару залӗнчен тухакан Сталин йулташа, партипе правителствӑ руководителӗсене ура ҫине тӑрса, тӑвӑллӑн алӑ ҫупса ӑсатать.

(ТАСС).

Национаљнӑҫсен Совечӗн 1938 ҫулхи йанварӗн 12-мӗшӗнче пулнӑ ларувӗ

Йанварӗн 12-мӗшӗнче Кремљре Национаљнӑҫсен Совет ларувӗсен залне халӑх шанса суйланӑ сынсем—вырӑссем, украинецсем, белоруссем, узбексем, грузинсем, туркменсем, армйансем, тутарсем, аслӑ совет ҫӗршывӗн мӗн пур национаљнӑҫсен представителӗсем пырса тулнӑ.

Каҫхине, сакӑр сехет. Правителствӑ ложи ҫине Сталин, Молотов, Ворошилов, Каганович, Калинин, Андрейев, Микойан, Чубарь, Косиор, Йежов, Жданов йулташсем тухаҫҫӗ.

Депутатсем хӑйсен вырӑнӗсенчен тӑрса халӑхсен аслӑ учителӗпе тусне саламласа чылай вӑхӑт хушши хӗрӳлӗ оваци тӑваҫҫӗ. Залӑн пур кӗтесӗсенчен те хаваслӑ саламланисем илтӗнеҫҫӗ — „урра Сталина!", „Телейлӗ те савӑнӑҫлӑ пурнӑҫшӑн урра Сталина!"

Ҫессине ҫул тӗлӗшӗнчен чи ватӑ депутат Миха Цхакайа йулташ уҫать. Вӑл, ССР Сойузӗнчи халӑхсен ӑсларан та аслӑ ҫӗнтерӳвӗсем ҫинчен калать „Совет Сойузӗнче пурӑнакан мӗн пур халӑхсемпе народнӑҫсем, — тесе калать Цхакайа йулташ,—пурте пӗр шухӑшлӑн Ленинӑн—Сталинӑн аслӑ партийӗн интернационаллӑ хӗрлӗ йалавӗ айне тӑчӗҫ".

Цхакайа йулташ ССР Сойузӗн ҫӗнӗ Конституцине туса паракан генилӗ сын йатне, социалисӑмӑн ӑсларан та аслӑ ҫӗнтерӳвӗсене организацилекенӗн тата чӗрӗ вӑй парса хавхалантараканӑн йатне—Сталин йулташ йатне асӑнсан зал ҫӗнӗрен тӑвӑллӑ оваци тунипе кӗрлесе кайать.

Ҫесси Национаљнӑҫсен Совечӗн Председателне пӗр сасӑпах депутата Н. М. Шверник йулташа суйлать.

Национаљнӑҫсен Совечӗн Председател заместителӗсене пӗр сасӑпах Ч. А. Асланова тата А. М. Левицкий йулташсене суйлаҫҫӗ.

Асланова йулташ—партире тӑман учителницӑ, Баку хулинчи Октаберский районри туллимар вӑтам шкул директорӗ. Вӑл Национаљнӑҫсен Совечӗн Председател заместителне суйламали пысӑк чыса — ӳссе пыракан ӑрува вӗрентсе ҫитӗнтерес тӗлӗшпе тунӑ хӑйӗн паха ӗҫӗпе тивӗҫлӗ пулнӑ.

Левицкий йулташ — Белоруҫҫи компартин Тӗп Комитечӗн секретарӗ, граждӑн вӑрҫинче пулнӑ, пирӗн социалисӑмлӑ тӑван ҫӗршывӑн шанчӑклӑ ывӑлӗ.

Ҫесси пӗр сасӑпах кун йӗркине ҫирӗплетнӗ хыҫҫӑн, Мандат Комиҫҫине тата Национаљнӑҫсен Совечӗн йаланлӑх комиҫҫийӗсене: Саккунсем хатӗрлекен, Бӳджет, Йутҫӗршыв ӗҫӗсен комиҫҫисене суйланӑ.

Мандат комиҫҫи председателне Садык Нурпеисов йулташа суйланӑ.

Саккунсем хатӗрлекен Комиҫҫи Председателне П. А. Тӳркин йулташа, Бӳджет Комиҫҫи председателне И. С. Хохлов йулташа. Йутҫӗршыв ӗҫӗсен Комиҫҫи Председателне Н. А. Булганин йулташа суйланӑ.

Йаланлӑх комиҫҫисене суйланӑ хыҫҫӑн Национаљнӑҫсен Совечӗн Ҫессин пӗрремӗш ларувӗ хупӑнать.

(ТАСС).

Сойуз Совечӗн 1938 ҫулхи йанварӗн 13-мӗшӗнче пулнӑ ларувӗ

Йанварӗн 13-мӗшӗнче кӑнтӑрла 11 сехетре Сойуз Совет ларувӗсен залӗнче Кремљре Сойуз Совечӗн иккӗмӗш ларувӗ пулса иртнӗ. ССР Сойузӗн Аслӑ Совечӗн пӗрремӗш Ҫессин ӗҫне пурте пӗр шухӑшлӑ пулни, бољшевикла ӗҫлӗх хакласа кӑтартать.

Президиумра—Сойуз Совечӗн Председателӗ А. А. Андрейев йулташ тата Сойуз Совет Председателӗн заместителӗсем Д. Т. Лысенкопа С. Сегизбайев йулташсем. Ложӑсенче—Молотов, Калинин, Ворошилов, Каганович, Микойан, Чубарь, Косиор, Жданов, Йежов, Литвинов, Хрущчев, Шверник, Петровский, Берийа тата ытти йулташсем те.

Пӗрремӗш ыйтупа Сойуз Совечӗн Ҫессин кун йӗркинчи иккӗмӗш пунктне—Сойуз Совечӗн йаланлӑх Комиҫҫийӗсем ҫинчен пӑхса тухаҫҫӗ. Сойуз Совечӗ Саккунсем хатӗрлекен Комиҫҫи, Бӳджет Комиҫҫийӗ, Йутҫӗршыв ӗҫӗсен Комиҫҫине ҫирӗплетет.

Йутҫӗршыв ӗҫӗсен Комиҫҫи Председателне, тӑвӑллӑн алӑ ҫупса, ПСК(б)П Тӗп Комитечӗн секретарне, Ленинград бољшевикӗсен хастарлӑ руководителне, Сталин йулташӑн шанчӑклӑ ученикне, Сойуз Совечӗн депутатне Андрей Александрович Жданова суйлаҫҫӗ.

Саккунсем хатӗрлекен Комиҫҫи Председателне депутат Д. М. Йевтушенко йулташа, Бӳджет Комиҫҫи Председателне—депутат И. И. Сидоров йулташа суйлаҫҫӗ.

Сойуз Совечӗ Сойуз Совет Ҫессин кун йӗркинчи 7-мӗш пунктне—депутатсене хӑйсен депутат обйазаннӑҫӗсене пурнӑҫа кӗртнипе сыхӑнса тӑракан расходсене тӳлесси ҫинчен—пӑхса тухма Сойуз Совечӗпе Национаљнӑҫсен Совечӗн пӗрлехи ларуне куҫарма пана сӗнӳве йышӑнать.

Ҫакӑнпа Сойуз Совечӗн иккӗмӗш ларувӗ хупӑнать.

(ТАСС).

ССР Сойуз Аслă Совечĕн пĕрремĕш Çессийĕ

А. Н. БАХ депутат Сойуз Совечĕн Çессине уçнă чухне каланă сăмах

Йулташсем, хамăр çĕршыври 90 мĕлйун суйлавçăсен ирĕкĕпе пирĕн çине хисеплĕ те ответлă обйазанноç хунă—пирĕн, Сталинла Аслă Конституципе пĕтĕмпех шайлăн, Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузĕн Аслă Совечĕн пĕрремĕш Çессине уçмала тата ирттермеле. **(Шавлăн алă çупаççĕ).**

Сталинла Конституци етемлĕх историнчи çĕнĕ аслă ерăна, производствă орудийĕсемпе хатĕрĕсене коллективлăн тытса тăракан тата вĕсемпе коллективлăн усă куракан никĕслĕ социалисăмла обществă ерипе кăтартса тăрать.

Сталинла Конституци пирĕн çĕршывра Октйабĕрти Социалисăмла революци хыççăн пулнă тарăн, тĕпрен улшăнусене законодателство йĕркипе формăласа çирĕплетсе пачĕ,—çавăнта пулать те унăн пĕтĕм тĕнчипе историлĕ пахалăхĕ.

Сталинла Конституци мĕн пур конституцисенчен чи демократилли анчах мар, вăл тĕнчери пĕртен-пĕр чăннипе демократилĕ Конституци. Мĕнпа? Мĕншĕн тесен, демократи, çынăн, гражданинăн прависем Конституцире мĕн çырса хунинчен мар, производствăлă хутшăнусенчен килеççĕ. Производствă хатĕрĕсем уйрăм харпăрлăх пулса тăнă çĕрте,—унта пуйанрах çынна çын експлоатацилени пулать, унта чăн демократи çук, пулма та пултараймасть, унта ирĕклĕх çук, пулма та пултараймасть.

Пирĕн çĕршывра Октйабĕрти Социалисăмла революци производствă хатĕрĕсем уйрăм харпăрлăх пулса тăнине йаланлăхах пĕтерсе хучĕ, çынна çын експлоатацилемелли майа ĕмĕрлĕхе пĕтерчĕ.

Çавăнтан килет те ĕнтĕ пирĕн ĕçсыннисен массисем социалисăм строителстви çине, Ленин — Сталин партийĕ йертсе пынипе хăйсем туса пыракан социалисăм строителстви çине, тата социалисăмăн çĕнтерӳвĕсене саккунласа формăлани пулса тăракан Сталинла Конституци çине мĕнле пăхни.

Суйлава хутшăннă суйлавçăсен хисепĕ тăрăх, коммунистсемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн панă сасăсен хисепĕ тăрăх илсен, декабĕрĕн 12-мĕшĕнчи пек суйлав урăх нихăш çĕршывра та нихăçан та пулман. Суйлавсем пур çĕрте те праçник чухнехи пек иртрĕç, гражданинăн пысăк тивĕçне пурнăçа кӳртессине ăнланнипе иртрĕç. Декабĕрĕн 12-мĕшĕнчи суйлавсен результачĕсем кăтартса пачĕç — пирĕн Сойуз халăхĕ хăйне харпăрăн интересĕсемшĕн пурăнакан уйрăм ушкăнсем мар, вăл пĕрлĕхлĕ, тачă пĕтĕçнĕ, ăнланса Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе социалисăмла обществă тăвас çулпа, çĕнĕ, тĕрĕслĕхлĕ те телейлĕ пурнăç тăвас çулпа пыракан аслă коллектив пулса тăрать **(шавлăн, нумайчен алă çупаççĕ).**

Йулташсем, Октйабĕрти Социалисăмла Аслă революци пулнăранпа иртнĕ çирĕм çул хушшинче епĕр социалисăмла обществăн çуртне çирĕп никĕспе хыврăмăр анчах мар, çак çурта çине витме те тухса ситертĕмĕр. Çакна епĕр политикăлă, економикăлă тата културăлă ĕçсенче пур йенпе те тунă, çавсене пурте йышăнни, ситĕнӳсем кăтартса тăраççĕ. Анчах çак çурта лайăхлатса пырас, тата çите те телейле пирĕн йăвăр ĕçсем нумай туса пымала килет-ха. Социалисăмла строителствăна малалла туса пырас ыйтусем ССР Сойузĕн Аслă Советĕнче сийĕн суйлее пулĕç.

Çав ыйтусенчен чи малта тăраканни—техникăлă процессене тивĕçлĕн лайăхлатса, стахановла ĕç тухăçлăхĕне рацилă усă курасси пулать.

В. И. Ленин хăйĕн ĕçĕсенче пĕринче капиталисăмла феодализмла фабрик-заводри ĕç тухăçлăхне крепăçла ĕç тухăçлăхĕпе танлаштарсан пит пысăккăн ӳстерни пекех, социалисăм капиталисăма коллективлă социалисăмла ĕç тухăçлăхне капиталисăмла обществăри ĕç тухăçлăхĕпе танлаштарсан пит пысăккăн ӳстерни пе çĕнтерет, тесе палла тунă.

Стахановла йухăм, халăх хуçалăхĕн тĕрлĕ отраслисенчи ĕçсыннисен массисене çавăрса илнĕ, пирĕн социалисăм строителствине пула уснĕ стахановла йухăм — аслă учител малтанах каласа хуни тĕрĕссине чăплăн кăтартса пачĕ.

Техникăла процессене стахановла ĕç тухăçлăхĕпе шайлаштарса лайăхлатса пыни—пирĕн промышленноçа, пĕтĕм халăх хуçалăхне аслă тапракурăм уçса парать. Капиталисăмла çĕршывсенче, предприйатисен производствăлă пултарулăхĕ, ĕç тухăçлăхĕ хăпарнă никĕс çинче, пысăккăн ӳсни — пурпĕрех таварсем выртмасăр пулса тăни патне, економикăлă кризис патне илсе пынă пулĕччĕ. Пирĕн çĕршывра вăл ĕç кунĕ чакни патне анчах илсе пырать,—ĕç кунĕ ССР Сойузĕнче халĕ те ĕнтĕ кирек хăш урăх çĕршывринчен те кĕске. А ĕç кунĕ чакни ĕçсыннисен културăлă ĕçсем валли, хăйсен културăлă тăрăвне ӳстерме вăхăт ытларах пулмала тăвать, — урăхла каласан, ăспа ĕçлессипе ал-ура вăйĕпе ĕçлесси хушшинчи уйрăмлăх тăтăшах пĕксе пырассине пулăшать.

Производствăна ӳстерсе пырассипе пĕрлех, пирĕн ĕçсынни массисемшĕн културăпа йăла йенĕпе ĕçлес тĕлĕшпе нумай тимлĕх хумала пулать.

Йулташсем, пирĕн ситĕнӳсем пит пысăк. Анчах епĕр тăшмансем çинчен те, капиталисăмла йĕритавралăх çинчен манмастпăр. Тăшмансем пирĕн ситĕнӳсем çине — кусем епĕр сыхлакан капиталисăмла стройăн вилĕмле хăрушлăх, тесе пăхаççĕ. Ĕнтĕ, йулашки çулсенче пирĕн çине тапăнмарĕç пулсан, çавă вăл пирĕн Хĕрлĕ Çар пит лайăххине курса тăшмансем — кусене тапăнсан хамăрах ырри пулас çук, тесе шиклентĕрен килчĕ. **(Тăвăллăн, нумайччен алă çупаççĕ).**

Йулташсем, чăннипех ĕнтĕ пирĕн Хĕрлĕ Çар хăйĕн вăрçăлă хатĕрленӳвĕпе, хăйĕн хĕçпăшалĕсемпе чи лайăххисенчен пĕри. Çав вăхăтрах тата вăл тăван çĕршывшăн пĕтĕм чĕререн тăрас йенпе чăннипех чи лайăххи.

Капиталисăмла çĕршывсенче çарти тĕп йыш ĕçсыннисем, вĕсем капиталисăмла стройăн класлă тăшманĕсем пулса тăраççĕ. Çавăнти çарсенче дисциплинăна хайар наказанисемпе çеç тытса тăраççĕ.

Пирĕн Хĕрлĕ Çар— ĕçсыннисен массисемпе тач тăван. Вăл халăхăн çĕнĕ, телейлĕ пурнăçне тăвас ĕçшĕн хĕрӳллĕн, пĕтĕм чĕререн тăрать.

Епĕр миршăн пур майпа та тăрăшатпăр. Миршăн епĕр, нимпе те айăплă мар çынсем çапăçнинчен йĕрĕннĕрен тата çавна курайманран анчах мар, тата вăрçă пирĕн социалисăм строителствине чарса тăма пултарнăран, тăрăшатпăр. Епĕр—мир пултăр, тетпĕр, анчах пирĕн çине тапăнсан, епĕр пурте, пурте пĕр çын пек кар тăрса хамăрăн социалисăмла тăван çĕршыва сыхлатпăр, вара пирĕн тăшмансемшĕн хуйха пулĕ. **(Тăвăллăн, нумайччен алă çупаççĕ. Пурте тăраççĕ. Сасă: „Сывă пултăр пирĕн Хĕрлĕ Çар!" (шавлăн, нумайччен алă çупаççĕ. „Урра!" кăшкăраççĕ).**

Йулташсем, Октйабĕрти Социалисăмла революци пулнăранпа иртнĕ çирĕм çул историне, коммунистсен партийĕ йертсе пынипе тунă пит пысăк ситĕнӳсене историлĕ ĕмĕрсене витĕр вĕрентет, ĕçсыннисен массисем хăйсен класлă интересĕсене уçăмлăн ăнлансан, вĕсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешме хатĕр пулсан мĕн тума пултарнине сутă примерпа кăтартса тăрать.

Йулташсем, сывă пулччăр пирĕн çĕршывра, Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе тĕнчери пĕрремĕш социалисăмла государствăна туса хунă ĕçсыннисем! **(Залра пурте ура çине тăраççĕ, тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Сывă пултăр Пĕтĕм Сойузри Коммунистсен Партийĕ **(тăвăллăн алă çупаççĕ)** ĕçсыннисен авангарчĕ, вăл ĕçсыннисене пĕрле хамăрăн аслă строителствăри пур йывăрлăхсене те хăйĕн хулпуççийĕ çинче çĕнтерсе пычĕ. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Йулташсем, Сойуз Совечĕн пĕрремĕш Çессийĕ уçăлнă тесе шутлатăп.

(Залра пурте ура çине тăраççĕ, тăвăллăн алă çупаççĕ. Алă çупни оваци пулса кайать).

Выранĕсенчен сасăсем илтĕнеççĕ: „Сывă пултăр Сталин йулташ, урра!"

(Тăвăллăн алă çупаççĕ, оваци тăваççĕ, „урра" кăшкăраççĕ).

А. А. ЖДАНОВ депутат сăмахĕ

Йулташсем, Мускав, Ленинград, Кийев тата Тбилиси депутачĕсен групписем мана Сойуз Совечĕн пĕрремĕш Çессинче сӳтсе-йавма Сойуз Совечĕн пĕрремĕш Çессин кун йĕркине çак ыйтусене кĕртесси çинчен сĕнӳ пама хушрĕ.

Пĕрремĕш ыйту—Сойуз Совечĕн Мандат Комиççине суйласси.

Çак ыйтува лартас мотивсем Конституцин 50 статйинчен тухса тăраççĕ, вăл статйа тăрăх Сойуз Совечĕпе Националнăçсен Совечĕ кашни палатăн депутачĕсен полномочисене тĕрĕслекен Мандат Комиççисене суйласа лартаççĕ.

Иккĕмĕш ыйту—Сойуз Совечĕн йаланлăх Комиççисене суйласси çинчен.

Çак ыйтува лартни мĕншĕн кирли Сойуз Совет Çессин заседанийĕсем валли Сойуз Совечĕн компетенцине кĕрекен ыйтусене хатĕрлеме кирлинчен тухса тăрать: саккунсене, бйуджета т. ыт. те хатĕрлесси.

Çак ыйтусемпе пурипе те Сойуз Совечĕн йаланлăх Комиççисене организацилесси аван пулать, йулмала.

Кун йĕркин виççĕмĕш ыйтăвĕ—ССРС Тĕпĕçтăвкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă решенисене май, ССР Сойузĕн Конституцин хăшпĕр статйисене улшăнусем тата хушса çырнисем кĕртесси.

Йаллă. Конституцине йышăннăранпа çулталăк ытла иртрĕ. Çак вăхăтра, Государствăна тытса тăрас ĕç ыйтнă май, ССРС Тĕпĕçтăвкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ССРС Конституцин хăшпĕр статйисене чылай улшăнусем, сойузлă республикăсенче çĕнĕ облăçсем организациленипе, çĕнĕ Халăх Комиссариачĕсем организациленине т. ыт. те сыхăнса тăракан улшăнусене кĕртрĕç.

Мана кун йĕркипе тăрăх шухăшсене каласа пама хушнă делегатсен групписем Сойуз Совечĕн Çессийĕ пухăначчен йышăнса Конституцин хăшпĕр статйисене улăштарни тата хушни çинчен ыйту лартса Сойуз Совечĕ сӳтсе-йавни кирлĕ пулать пулĕ тесе шутлать.

Епĕр кун йĕркине кĕртме сĕнекен тăваттăмĕш ыйту—ССРС Аслă Совечĕн Президиумне суйласси.

Пиллĕкмĕш ыйту—ССРС правителствине—ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечне туса хурасси.

Улттăмĕш ыйту—ССР Сойузĕн Прокурорне уйăрса лартасси.

Çиччĕмĕш ыйту — Депутатсене вĕсем депутат обйазаннăçне пурнăçа кĕртнипе сыхăнса тăракан расходсене тӳлесси çинчен.

Ак çак ыйтусене ĕнтĕ Сойуз Совечĕн Çессине пăхса тухма тата сӳтсе-йавма лартсан аван пулнă пулĕччĕ, тесе шутлать депутатсен групни.

Сӳтсе-йавас йĕрке çинчен каласан, Сойуз Конституцийĕн 48-мĕш статйи тăрăх, Аслă Совет президиумĕ икĕ палатăн пĕрлешӳлĕ ларăвĕнче суйланать. Конституцин 56-мĕш статйи тăрăх, ССР Сойузĕн Правителстви те çавăн пекех Аслă Советăн икĕ палаттин пĕрлешӳлĕ ларăвĕнче суйланать.

Çакна май, епĕр Сойуз Совечĕ ССРС правителствине туса хурас тата Аслă Совет Президиумне суйлас ыйтусене Аслă Советăн пĕрремĕш Çессинче сӳтсе-йавас тĕлĕшпе пуçарса пыни кирлĕ пулĕ, тесе шутлатпăр.

Сойуз Совечĕ çак ыйтусене икĕ палаттăн пĕрлешӳлĕ ларăвĕсенче хальтерехех сӳтсе-йавма кирлĕ тесе шутлĕ тата пирĕн палаттăн председателне Националнăçсен Совечĕн председателĕпе Аслă Совет Президиумне суйлас тата Сойузăн Правителствине туса хурас ыйтусене сӳтсе-йавма икĕ палаттăн пĕрлешӳлĕ ларуне тăвасси çинчен калаçса татăлма хушĕ, тесе шутлатăп епĕ.

Конституцин хăшпĕр статйисене улăштарасси тата хушасси çинчен тăракан ыйтува тата ССР Сойузĕн Прокурорĕ çинчен тăракан ыйтува сӳтсе-йавас йĕркесем пирки каласан, депутатсен çав группийĕх мана Сойуз Советне çак ыйтусене те икĕ палаттăн пĕрлешӳлĕ ларăвĕнче сӳтсе-йавма кирлĕ пулать пулĕ, тесе пĕлтерме хушрĕ.

Çак сĕнӳсене пама хушрĕ те ĕнтĕ мана депутатсен группийĕ.

Националнăçсен Совечĕн Çессине уçнă чухне М. Г. ЦХАКАЙА депутат каланă сăмах

Хаклă йулташсем — ССР Сойуз Аслă Совечĕн Националнăçсен Совечĕн депутачĕсем! Хамăрăн пĕрремĕш Çессине уçас умĕн мана суйлавсен историйĕ çинчен кĕскен чарăнса тăма ирĕк парăр. Пайанхи чаплă кун—пĕтĕм халăхăн чăн-чăн аслă праçникĕ—тĕнчере чи ирĕклĕ те чи демократиллĕ Сталинла Социалисăмла Конституци тăрăх суйланă Аслă Совет Çессийĕ уçăлнă кун. **(Алă çупаççĕ, „ура" кăшкăраççĕ).**

Чăнах та, йулташсем, суйлавсен историйĕ мĕнле-ха? Суйлавсенче коммунистсемпе партире тăманнисен блок çĕнтерӳвĕн резултачĕсем мĕнле-ха? Сăмахран: Мускавра суйлавçăсенчен 99,13 процентĕ суйлава хутшăннă, Ленинградра—96,8 проц., Минскра—99,6 проц., Бакура — 95,5 проц., Тбилисире—95,6 процент....

Тĕнчере те, тата чи демократиллĕ çĕршывсенче те халиччен курман резултатсем! Мĕн пирки капла пулчĕç-ха вĕсем? Вĕсем акă мĕн пирки, йулташсем, çапла пулчĕç: рабочи класăн нумай нацилĕ государствинче, рабочисемпе хресченсен аслă державинче социалисăма пурнăçа кĕртнĕ ĕнтĕ, вăл халăхсен йăлипе, кулленхи пурнăçне кĕнĕ.

Пирĕн совет халăхĕсен тăванлăхĕ, пĕрлĕхĕ тата вĕсем Ленин—Сталин аслă партийĕ тавра пĕтĕçни пирĕн тăван çĕршыва пикам çĕнтерейми тăваççĕ. Епĕр пĕтĕм ССР Сойузĕнче, унăн мĕн пур вуншăр сойузлă республикĕсенче тата вĕсене кĕрекен автономлă пайĕсенче тӳррĕн те пĕр чарăнмасăр улăп утăмĕсемпе коммунисăм патне кайатпăр.

ССР Сойузĕнчи мĕн пур ăрусем, нацисем, халăхсем аслă хастарлăхпа, аслă социалисăмлă ăмăртупа—çак чи тухăçлă социалисăмлă ĕçĕн коммунисăмла меслечĕпе хавасланса ĕçлеççĕ, социалисăм строителствинче, аслă културă строителствинче, халăхсен коммунисăмлă тăванлăхне тĕреклетессипе хавхаланса ĕçлеççĕ.

Епĕр, йулташсем, çĕнĕ пурнăç, çĕнĕ цивилизаци, çĕнĕ културă, формипе нацилĕ, содержанийĕпе социалисăмлă културă тăватпăр.

Патша режимĕ вăхăтĕнче чи кайа йулнă, тĕттĕм пулнă националнăçсем ССР Сойузĕнче ирĕклĕ халăхсем пулса тăчĕç, вĕсем хăйсен нацилĕ уйрăм пурăннин ĕлĕкхи мĕн пур хушшисене, пĕр-пĕрне йуратмасăр, кӳршĕсем пек килĕштермесĕр пурăннине сирсе йачĕç те пурте пĕрлешсе, пĕр-пĕрипе туслăн пурăнса социалисăмла индустрипе социалисăмла йалхуçалăхĕ тăваççĕ. Совет Сойузĕнче пурăнакан мĕн пур халăхсемпе народнăçсем пурте пĕр шухăшлăн Ленинăн—Сталинăн Аслă партийĕн интернационаллă Хĕрлĕ йалавĕ айне тăчĕç. **(Алă çупаççĕ).**

Вĕсен ачисем пирĕн мухтавлă паттăр Хĕрлĕ Çарта та, пирĕн тăван çĕршыван чиккисене тӳрех, кашни сехетрех хурал тăнă çĕрте те пĕтĕм тĕнчери фашисăм диверсанчĕсен, шпионĕсен çулне пӳлсе тăраççĕ. Фашиссем пирĕн обществăн çийĕсенче тата пирĕн парти ретĕнче те хăйсен маскăпа витĕннĕ вăрттăн агенчĕсене тытма тăрăшнă, халь те тăрăшаççĕ. Фашиссем вăл агентсене ылханлă троцкисла-бухаринла бандитсем хушшинчен, буржуалă националистсем хушшинчен, халăхăн ытти тăшманĕсем хушшинчен пулаççĕ.

Анчах пирĕн революцийĕ мухтавлă хӳтлекенсем, пĕрремĕш маршăл, пархатарлă Хĕрлĕ Çарăн мухтавлă полководци Ворошилов йулташ тата Социалисăмлă Хĕрлĕ разведкăн мухтавлă Наркомĕ Иежов йулташ, ССР Сойузĕнчи мĕн пур халăхсемпе нацисем пулăшса пынипе, республикăсен ăшĕнче те тата пирĕн аслă тăван çĕршывăн—ССР Сойузĕн мĕн пур чиккисенче те халăх тăшманĕсене пĕр хĕрхенӳсĕр пĕтерсе пыраççĕ. Пирĕн Советсен çĕршывĕ фашиссемпе тата империалисăмăн тĕнчери тискер кайăкĕсемшĕн пырса тĕкĕнейми çĕршыв пулса тăрать.

Ленин—Сталин партийĕн организаторла аслă вăйĕ Аслă Совет суйлавĕнче коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕ çĕнтермелле турĕ. Çак çĕнтерӳ, хаклă йулташсем — Националнăçсен Совечĕн депутачĕсем, пирĕн хăвата вунă хут ӳстерет, пире Аслă ССР Сойузĕн Хĕрлĕ столицине—Мускава, хамăрăн тăван хулана ытларах туртать тата епĕр аслă вырăс халăхне çулăмлăн йуратнине татах вăйлатать, çав вырăс халăхĕ Совет влаçĕшĕн, рабочи клас диктатуришĕн, социалисăмлă ĕç çĕнтерӳвĕшĕн, рабочисемпе хресченсен аслă туслăхĕшĕн аслă кĕрешӳ йалавне чи малтан çĕклерĕ.

Спасибă, хĕрӳлĕ спасибă пĕтĕм вырăс халăхне! Аслă спасибă Ленин хулинчи—çĕнтерӳлĕ революци сăпкинчи рабочисене! Хĕрӳлĕ спасибă пирĕн Хĕрлĕ столицари—Мускаври рабочисене, Ивановори ткачсемпе ткачихăсене, Донбасри, Бакури, Уралти, Тбилисири рабочисене, пирĕн чукунçул транспортĕнчи рабочисене, çĕр чăмăрĕн пĕр улттăмĕш пайĕнче коммунисăм туса ситерме пулăшакан массăлă стахановла йухăм тăвакан хулапа йалти мĕн пур ĕçсыннисене хĕрӳлĕ спасибă! **(Тăвăллăн алă çупни нумайччен тăсăлакан овацине куçать. Халăхсен аслă туслăхне чысласа нумай нацилĕ чĕлхесемпе саламласа кăшкăраççĕ).**

Йулташсем, ССР Сойуз Аслă Совечĕн Националнăçсен Совечĕн пĕрремĕш Çессийĕ уçăлнă аслă кун йачĕпе Сире сывлăх сунатăп, епĕ çакна сунатăп—пирĕн сирĕнпе пĕрле çакна нихăçан та манма кирлĕ мар, епĕр—Аслă Совет депутачĕсем—хамăра суйласа йанă халăхăн тарçисем çеç. Халăх наказĕсене пурнăçа кĕртсе пырса, епĕр йаланах аслă Ленинăн тата социалисăмла Конституци туса паракан, халăхсен çулпуçĕн, пирĕн чи йуратнă аслă Сталинăн йар-çутă сăнарлăхĕсемпе чĕр вăй илсе хавхаланса тăратпăр. **(Тăвăллăн алă çупни овацине куçать. Сталин йулташа чысласа ССР Сойузĕнчи халăхсен чĕлхисемпе саламласа кăшкăраççĕ).**

Çак кĕске сăмахпа тата сунăмсемпе епĕ ССР Сойуз Аслă Совечĕн Националнăçсен Совечĕн пĕрремĕш Çессине уçăлнă тесе пĕлтеретĕп. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ. „Урра!" кăшкăраççĕ. Оваци. Депутатсем Сталин йулташа хăйсĕн тăван чĕлхисемпе саламлаççĕ. Саламласа кăшкăрнă вăхăтрах тăвăллă оваци тăваççĕ, оваци темиçе минут хушшине тăсăлать).**

Н. А. БУЛГАНИН депутат сăмахĕ

Йулташсем, РСФСР, Казахстан тата Белоруççи депутачĕсен ушкăнĕ мана Националнăçсен Совечĕн пĕрремĕш Çессин кун йĕркинчи ыйту тăрăх тухса калама хушрĕ.

Асăннă депутатсен ушкăнĕ кун йĕркине çак ыйтусене кĕртме кирлĕ тесе шутлать:

1. Националнăçсен Совечĕн Мандат Комиççине суйласси.
2. Националнăçсен Совечĕн йаланлăх Комиççисене суйласси.
3. ССР Сойузĕн Тĕпĕçтăвкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă решенисене май, ССР Сойуз Конституцин хăшпĕр статйисене улшăнусемпе хушусем кĕртесси.
4. ССР Сойузĕн Аслă Совет Президиумне суйласси—
   а) ССР Сойузĕн Аслă Совет Президиумĕн Председателне,
   б) ССР Сойузĕн Аслă Совет Президиумĕн Председател заместителĕсене,
   в) ССР Сойузĕн Аслă Совет Президиумĕн секретарне,
   г) ССР Сойузĕн Аслă Совет Президиумĕн членĕсене суйласси.
5. ССР Сойузĕн Правителствине—ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечне туса хурасси.
6. ССР Сойузĕн Прокурорне уйăрса лартасси.
7. Депутатсене хăйсен депутат обйазаннăçĕсене пурнăçа кĕртнипе сыхăнса тăракан расходсене тӳлесси çинчен.

Çакăнта кăтартнă кун йĕркин пиксĕсем çинчен калас пулсан вара, епĕ кăтартса панă депутатсен ушкăнĕ çакăн пек сĕнтавлама хушрĕ:

Пĕрремĕш ыйту—Националнăçсен Совечĕн Мандат Комиççине суйласси—Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузĕн Конституцин 50-мĕш статйинче кăтартса панă.

Иккĕмĕш ыйту—Националнăçсен Совечĕн йаланлăх Комиççисене суйласси çинчен мана тухса калама хушнă депутатсем именно çавăн пек Комиççисем туни вырăнлă тесе шутлаççĕ. Вăл Комиççисене, вĕсем Националнăçсен Советĕнче тăтса памалли ыйтусене хатĕрлеме пултарччăр, тесе тума кирлĕ.

Йулашкинчен, виççĕмĕш ыйту — ССР Сойуз Конституцин хăшпĕр статйисене улшăнусемпе хушусем кĕртесси—Совет Сойузĕн Тĕпĕçтăвкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ облăçсене уйăрассипе çĕнĕ облăçсем тăвасси пирки, çĕнĕ халăх комиссариачĕсем тăвасси пирки йышăннă палла решенисенчен тухса тăрать.

Йулташсем, кунта пĕрремĕш Çессин çак кун йĕрки çинчен мана тухса калама полномочи панисем, çавăн пекех мана хăйсем çакăн çинчен шутланине те каласа пама хушрĕç: çак кун йĕркинчи чылай ыйтусене епĕр икĕ палатăн пĕрлехи ларуне куçарма кирлĕ тесе шутлатпăр, çакна та епĕр Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузĕн Конституцинчи палла статйасем тăрăхах тăватпăр.

Çапла, сăмахран, пирĕн Конституцин 48-мĕш статйи ССР Сойузĕн Аслă Совет Президиумне икĕ палатăн пĕрлехи ларăвĕнче суйламали çинчен калать.

Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузĕн Конституцин 56-мĕш статйи Правителствă туса хурасси, — Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Советне туса хурасси—çавăн пекех икĕ палатăн пĕрлехи ларăвĕнче пулса иртме кирли çинчен калать.

Ытти ыйтусене те—Конституци çумне улшăнусемпе хушусем кĕртес ыйту, Сойуз Прокурорне уйăрса лартас ыйту—çавăн пекех палатăсен пĕрлехи ларăвĕнче сӳтсе-йавма сĕнеççĕ. Тата йулашки ыйту—депутатсене хăйсен депутат обйазаннăçĕсене пурнăçа кĕртнипе сыхăнса тăракан расходсене тӳлес ыйту — Аслă Советăн мĕн пур депутачĕсене те тивнĕ май, вăл ыйтува та, çавăн пекех, Сойуз Совечĕпе Националнăçсен Совечĕн пĕрлехи ларăвĕнче итлеме сĕнеççĕ.

Çакна май çакăн пек сĕнӳ паратăп: пирĕн Председателе — Националнăçсен Совечĕн Председателне — епĕ кăтартса панă ыйтусене сӳтсе-йавма май пултăр тесе, пĕрлехи лару тума кирли çинчен Сойуз Совечĕн Председателĕпе калаçса татăлма хушас.

Çак ыйту тăрăх тухса калама мана полномочи панă депутатсен ушкăнĕн сĕнӳвĕ çавăн пек ĕнтĕ.

А. И. СТЕЦКИЙ депутат сăмахĕ

— Йулташсем, Аслă Совет депутачĕсем, епĕ, Армени, Узбекистан, Туркмени тата Чăваш Автономлă Республикă депутачĕсен ушкăнĕсен йачĕпе, Националнăçсен Совечĕн Бйуджет Комиççине суйлама сĕнӳ паратăп.

ССР Сойуз Конституцин 14-мĕш статйи тăрăх, Сойузлă Государствă: ССР Сойузĕн пĕрлĕхлĕ государствă бйуджетне, çавăн пекех тата Сойузри, республикăсенчи, вырăнсенчи бйуджетсене тума кĕрекен налогсемпе доходсене çирĕплетет.

Епĕ, йулташсем, пирĕн халăх хуçалăхĕнче, Совет Сойузĕн хуçалăх строителствинче бйуджет мĕнле вырăн йышăнса тăнине есĕр пурте лайăх пĕлсе тăратăр, тесе шухăшлатăп. Бйуджетра пĕтĕм хуçалăхлă пурнăç палăрса тăрать. Хуçалăх планĕ тата ăна пурнăçа кĕртесси бйуджетран чылайах килет, бйуджет çавна тĕреклетсе тăрать. Бйуджет тăрăх пирĕн Совет Государствин халăх дохочĕсем ĕçсыннисен интересĕсемшĕн, социалисăмла индустри аталанăвĕн интересĕсемшĕн, йалта колхозсемпе совхозсене çирĕплетсе тата аталантарса пырас интересшăн валеçĕнеççĕ. Бйуджет çавăн пекех тата културă строителстви валли кайакан расходсене палăртать. Бйуджет пирĕн сойузлă государствă çĕршыв оборонин нуписем валли, хамăрăн мухтавлă Хĕрлĕ Çара çирĕплетме тăвакан расходсене палăртать. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Çавăнпа, йулташсем, бйуджет ыйтувĕсем пит пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Вĕсем пур сойузлă республикăсен интересĕсене те тачăнах пырса тивеççĕ. Çавăнпа, паллах ĕнтĕ, бйуджета Аслă Советăн пит тĕплĕн сӳтсе-йавмала.

Бйуджета тĕплĕн пăхса тухмала пултăр тесе, депутатсен маларах асăннă ушкăнĕ Националнăçсен Совечĕн Бйуджет Комиççине суйласа хума сĕнет. Вăл ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Аслă Совет Çессине çирĕплетме тăратакан бйуджет проектне малтан пăхса тухтăр, вăл çав пройект пирки хăйĕн заклйученине туса, хăйĕн заклйученине Националнăçсен Совечĕн Çессине доклад туса патăр. Çавăнпа пĕрлех, çав Комиççи хамăр çĕршывăн правителстви Аслă Совет Çессине Государствă бйуджетне пурнăçа кĕртни çинчен тăратакан отчот пирки хăйĕн заклйученине пама пултать.

Çав шухăшсене асра тытса, депутатсен групписем Çессин пайанхи ларăвĕнче Националнăçсен Совечĕн йаланах ĕçлесе тăракан Бйуджет Комиççине суйлама сĕнӳ параççĕ.

О. Иу. ШМИДТ депутат сăмахĕ

Йулташсем, Националнăçсен Совечĕн депутачĕсем, Инçет-Хĕвелтухăç крайĕ, Украинă тата Тутар Автономлă Социалисăмла Совет Республикин депутачĕсен групписем йачĕпе Йутçĕршыв ĕçĕсен йаланлăх Комиççине организацилеме сĕнӳ паратăп. Çавăн пек Комиççи, пĕрремĕшĕнчен, пирĕн Конституцине пĕтĕмĕшпех килĕшӳлĕ тата, иккĕмĕшĕнчен, вăл кирлине епĕр пурăнакан вăхăт тата ĕç хăйĕх кăтартса парать.

Конституцин 14-мĕш статйинче ССРС компетенцине, пĕтĕм Сойузăн, унăн аслă органĕсен компетенцине мĕнле ĕçсене уйăрса хăварнине кăтартса панă.

Ытти ĕçсемпе пĕрле 14-мĕш статйара каланă:

а) тĕнчери государствăсем хушшинчи сыхăнусенче Сойуз ĕçне туса тăрасси, ытти государствăсемпе договорсем туса вĕсене ратификацилесси;

б) вăрçăпа мир ыйтăвĕсем;

в) ССР Сойуз составне çĕнĕ республикăсем йышăнасси.

Çапла ĕнтĕ, йутçĕршыв ĕçĕсем аслă орган—Аслă Совет, çав шутрах пирĕн Националнăçсен Совечĕн палатин компетенцине кĕреççĕ.

Кирлĕ-и пире йутçĕршыв ĕçĕсен Комиççийĕ? Пирĕн мирлĕх политики пирĕн çĕршывшăн кăна мар, пĕтĕм тĕнчешĕн те питĕ те пысăк историлĕ фактор пулса тăрать. Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузĕ мирлĕх политики пирĕн çĕршыв хăй çапла пулнинчен, вăл социалисăмла çĕршыв пулнинчен тухса тăрать. Вăл политикăпăн йут çĕршывсене туртса илесси йутă. Вăл пысăк халăхсен прависене те, пĕчĕк халăхсен прависене пĕр пекех хисеплесе тăрать.

ССР Сойузĕн мирлĕх политики, çавăн пекех тата, пирĕн çĕршыв тĕнчери чи демократиллĕ Сталинла Конституци тăрăх Октйабĕрти Социалисăмла аслă революцин çирĕм çулхи уйавне, Аслă Советăн пĕрремĕш çессине ситнĕ питĕ те пысăк ситĕнӳсем çинче никĕсленсе тăрать. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Епĕр кунта халăх депутачĕсем пулса—пирĕн çĕршыври ĕçсыннисем коммунистсен партийĕ йертсе пынипе, пирĕн çулпуç, мĕн пур прогреçсивлă етемлĕхĕн çулпуçĕ Сталин йулташ йертсе пынипе калама çук пысăк çĕнтерӳсем тунине пула килтĕмĕр. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ, алă çупни овацине куçать. Пĕтĕм зал ура çине тăрать. „Урра" кăшкăраççĕ).**

Çак ситĕнӳсем пирĕн çĕршыва пĕрремĕш класлă индустрилĕ державă туса хучĕç. Сталин йулташ тата унăн тĕрĕс соратникĕ Совет Сойузĕн Маршалĕ Ворошилов йулташ **(нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ. Пĕтĕм зал ура çине тăрать. Кăшкăраççĕ: „Сывă пултăр Сталин йулташ!". „Сывă пултăр Ворошилов йулташ! Урра!")** йертсе пынипе епĕр пĕрремĕш класлă Хĕрлĕ çар туса хутăмăр **(тăвăллăн алă çупаççĕ),** вăл пирĕн тăван çĕршыв çине пулас пур йышши тапăнусенчен сыхласа тăма тата ăна мирлĕх политикине тытса пыма май парать. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).**

А мирлĕх çине тапăнассисем пулма пултараççĕ. Унтан та ытларах, мирлĕхе йулашки çулсенче сутăнталăкăн виçĕ пайĕнче—Африкăра, Азире, Йевропăра пăснă. Çĕр чăмăрĕ халĕ [illegible] вăрçă вăхăтĕнче пурăнать.

Епĕр çакăн çинчен манма пултаратпăр-и? Епĕр хамăрăн мирлĕ строителствă хушшинче пирĕн патра шпионсем, диверсантсем йарса тăракан капиталисăмла йĕритавралăх çинчен, пирĕн патра йарса тăракан, анчах пирĕн НКВД тĕрĕс работникĕсем, Сталинла Халăх Комиссарĕ Иежов йулташ чаплăн та çине тăрса пĕтерсе пыракан агентурă хупăрласа тăни çинчен манма пултаратпăр-и? **(Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ. Пĕтĕм зал ура çине тăрать. КĂШКĂРАÇÇĔ: „ЙУРАТНА НАРКОМА НИКОЛАЙ ИВАНОВИЧ ИЕЖОВА УРРА!" (Тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Пирĕн ситĕнӳсемпе çĕнтерӳсем пирки хапсăнса хăйĕн малалăхĕшĕн шикленсе пăхакан йĕритавралăх çинчен епĕр манма пултаратпăр-и?

Пĕтĕм тĕнчери лару-тăрура хăрушă ĕçсем ӳссе пынине, мирлĕх принципĕсем пĕрмайах сийен тӳснине курмасăр тăма пултаратпăр-и епĕр? Пирĕн куç умĕнчех хăшпĕр государствăсем халăхсем хушшинчи договорсене уççăнах пăсаççĕ. Лигă нацине хавшатма тăрăшаççĕ. Çав вăхăтрах, уççăнах агреçсивлă тĕллевсемпе çĕнĕ сойузсем тума пăхаççĕ.

1914—18 çулсенчи пĕтĕм тĕнчери империалисăмла вăрçă умĕнхи атмосферăна аса илтерекен çакăн пек хайар лару-тăрура пирĕн Совет Сойузĕ мирлĕхĕн пĕтĕм тĕнчери никĕсĕ пулса, етемлĕхĕн шанчăкĕ пулса тăрать. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).** Çак лару-тăрура ССРС Аслă Совечĕ пĕтĕм тĕнчери ĕç çине питĕ тимлĕн çавăрăнса пăхмасăр тăма пултараймасть. Çавăн пек тимлĕн çавăрăнса пăхассине пирĕн пĕтĕм çĕршыв хăй çине илет. 170 мĕлйунлă çĕршывăн пĕтĕм халăхĕ хăйĕн правителствине унăн шалти тата тĕнчери политикинче пĕркăмăллăн хута кĕрсе пырать. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Çĕршыв хăйĕн правителствине мирлĕ строителствăна сыхласа тăрассинче хăйĕн мĕн пур хăвачĕпе хута кĕрсе пырать.

Пирĕн çĕршыв, Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ, Молотов йулташ каланă пек каласан, пĕтĕм тĕнчере нихăçан пулман моралĕпе тата политикăлă пĕрлĕх туса хучĕ. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ. „Совет Сойуз правителствин пуçлăхĕ Молотов йулташ сывă пултăр!" тесе кăшкăраççĕ. Тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Парти тата Правителствă кăтартса пынипе тĕрĕс сталинец, партин ĕçре тĕрĕсленнĕ членĕ, йутçĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ Литвинов йулташ питех те пултарулăн туса пыракан тулти мирлĕх политикине çĕршыв пĕр кăмăллăн пулса йышăнать. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Пирĕн аслă Совет халăх хисепĕнче тăракан нумай йышлă националнăçсем мирлĕхшĕн интереслĕнеççĕ, ăна хута кĕреç тата ун çине тапăнассинчен ăна сыхласа хăварма пултарĕç. Епĕр хамăрăн çĕнтерӳсене паратпăр-и вара? Нихăçан та! **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Йутçĕршыв политика ыйтăвĕсем пысăккăн тăнă пирки, епĕ, çӳлте асăннă депутатсен групписем йачĕпе, Националнăçсен Совечĕн йутçĕршыв ĕçĕсен Палаталăх Комиççине тумала тесе сĕнӳ паратăп. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Райçĕрĕç пайĕ сведенисем кĕтсе ларать

ШĂХАСАН (Телефонпа, хамăр корр.). Иртнĕ çул районĕпе вăтам шутпа кашни гектартан 100-шер пăт тĕштырă туса илнĕ. Уйрăм колхозсенче сталинла пысăк тухăçлă тырпулшăн большевикла кĕрешсе, пĕр гектартан 120 — 125-шер пăт тĕштырă туса илнĕ колхозсем те сахал мар.

Акă, Киров, Калинин йачĕпе тăракан, „Майăн 1-мĕш“ тата ытти колхозсенче иртнĕ çулта пĕтĕм йалхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра туса пырса тата агротехникăпа тĕрĕс усă курса ĕçленипе, нихăçан пулман пысăк тупăшлă тырпул туса илнĕ. Вăйлă тырпул туса илнĕ çĕрте уйрăмăнах çаксене палăртмала: Степанова, Данилов (Атнаш колхозĕ), Иванов, Степанов („Правда“), Назаров („Çĕнĕ çул“) йулташсен бригадисем районта чи малти вырăна тухнă. Вĕсем вăтамран пĕр гектар çинчен 170 пăтран пуçласа 286 пăта çити тĕштырă туса илнĕ.

Çак колхозсенчи лайăх ĕçлекенсем Захаров, Йаковлев — 700-шер пăт, Морозов — 558 пăт тĕштырă ĕçлесе илнĕ. Районра кунашкал нумай тырпул илекен колхозниксем татах та нумай.

Апла пулин те, çак асăннă колхозниксен, бригадирсен тата стахановецсен иртнĕ çулхи опычĕсемпе меслечĕсене районри колхозниксене кăтартса паман. Вĕсен опычĕсемпе кăçалхи большевикла çуракине хатĕрленнĕ çĕрте те усă курмаççĕ.

Шăхасан районĕнче ĕçлекен руководителсем иртнĕ çул пысăк тухăçлă тырпул туса илнипе лăпланса ларнă. Çывхарса килекен çуракине большевикла кĕтсе илме васкамаççĕ. Районра пулса иртнĕ коммуниссен пухувĕ те хăшпĕр руководителсен, пуринчен ытла çĕрĕç работникĕсен вăйлă тырпул туса илнипе пусĕсем саврăнса кайнине лайăх кăтартса пачĕ. Райçĕрĕç пайĕнче ĕçлекенсем çуракине хатĕрленесси çинчен сахал шухăшлаççĕ.

Районра пурĕ 14 трийер, вĕсенчен 9-шĕ çеç ĕçлеççĕ, 5 трийер çĕмрĕк пирка ĕçлемесĕрех ларасçĕ. Хăçан йусасси те паллă мар. Çавăнпа та ĕнтĕ акмали вăрлăха районĕпе 20 процент çеç суртлана. Колхозсем хушшинче суртлă вăрлăха улăштарас плана та 15 процент кăна тултарнă. Нумай колхозсен сĕлĕ тата ытти вăрлăхсене суртлă вăрлăхпа улăштармала, анчах ăçтан, хăçан улăштарасси паллă та мар. Районра клевĕр вăрлăхне те 59 процент çеç хывнă. Тислĕк пухас плана 11 процент кăна тултарнă. Çавăн пекех торф, кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкне пухасси та та тĕрлĕрен минераллă çăнăхсене кӳрсе килесси калама çук йулса пырать.

Районра пĕр пин плуг, 30 сеялкă пур. Вĕсене пайанхи куна çитсе те йусаман.

Ентрийел колхозĕн тимрĕç лаççи патĕнче плугсемпе сейалкă йур айĕнчех выртаççĕ. Пĕчĕк Ентрийел, Лачкасси, Анаткасси, Кайри Тукай, Малти Атнавăш тата ытти колхозсенче те çуракине хатĕрленессипе нимĕн те туман.

Парти райкомĕн секретарĕ Ашмарин йулташ хăйĕн докладĕнче 67 колхозран 47 колхоз çуракине хатĕрленессипе социалисăмла ăмăртăва хутшăннă, терĕ. Анчах райçĕрĕç пайĕн пуçлăхĕ Мухин йулташ, — колхозсем социалисăмла ăмăртăва хутшăнни çинчен пирĕн алăра пĕр договор та, сведени те çук, вĕсем хăçан ăмăртăва хутшăннине те пĕлместĕп, — терĕ.

Район çуракине хатĕрленессипе кайа йулнă пирки Мухин йулташ хăйĕн çинчен ответлăха сирсе йарса, районтан йалсене йанă уполномоченнăйсем çине йăвантарать.

— Мĕншĕн епĕр çуракине хатĕрленессипе кайа йулса пыратпăр? Мĕншĕн тесен, районтан йалсене йанă уполномоченнăйсем тата парти организацисем çуракине хатĕрленессипе нимĕн те тумаççĕ. Çавăнпа та епĕ райкома пĕлтерсе тăма та пултараймастăп, — тет Мухин.

Райçĕрĕç пайĕпе МТС аппарачĕсене халĕ те работниксем парса çитермен. МТС-ра аслă агроном, химизатор, инструктор — бухгалтер, участкăсене валли 3 агроном, 1 зоотехник кирлĕ.

Агротехникăна вĕренме пĕр колхозра та агрокружоксем организацилемен. ССР Сойузĕн Аслă Совет депутачĕсене суйлана вăхăтра 200 агитатор ытла ĕçленĕ пулна, халĕ вĕсене çухатса пĕтернĕ.

Шăхальпе Ăвăспуртри Кибек колхозĕсене вумай вăхăт хушши халăх тăшманĕсем сăтăрла ĕçсем туса пурăннă. Сăтăрла ĕç тăвакансене пĕтерес тĕлĕшпе райçĕрĕç пайĕпе парти райкомĕ йапăх ĕçленĕ.

Шăхасан районĕнчи руководителсем ПСК(б)П Тĕп Комитечĕпе ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çуракине хатĕрленессипе йышăннă постановленине пайанхи куна çитсе те колхозниксене ăнлантарса парассине йертсе пыма тытăнман.

Иакимов, Соколов.

Йур тытаççĕ

ВАРНАР. Районти чылай колхозсене иртнĕ çулта йур тытни вăйлă тырпул туса илме пулăшрĕ. Колцовкăри Сталин йачĕпе тăракан колхоз йур тытнă вырăнта йур тытман вырăнтипе танаштарсан, кашни гектартан 4 центнер ытлалах тĕш тырă туса илнĕ. Çавăн пекех пулнă Хорнзорти Чапайев йачĕпе тăракан колхозра та. Çавна шута илсе кăçал колхозсем уйра йур ытларах тытас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеме тытăнчĕç. Пайанхи куна çитсе Сталин йачĕпе тăракан колхоз 60 гектар çинче, „Çамрăк колхозник“ колхоз 20 гектар çинче, „Хĕрлĕ кавалерист“ колхоз 25 гектар çинче йур тытнă.

Ник. Козлов.

Вунă кун хушшинче

ВАРНАР. Йанварĕн 1-мĕшпе 10-ш хушшинче хăшпĕр колхозсем çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе чылай пысăк çитĕнӳсем турĕç. Акă, Мăнйалти „Трактор“ колхоз уйа 1000 лав ытла тислĕк, 1000 лава йахăн торф кăларнă. Вăрлăхсене çуррине ытла тасатнă. Кĕл пухаççĕ.

Хорнзорти колхозра торф кăларнă çĕрте Пайуновпа Стеклов колхозниксем кулленхи ĕç нормине 390 процент тултарса пыраççĕ.

ССР Сойуз Аслă Совечĕн пĕрремĕш Çессине Таджик ССРеспубликинчен пынă депутатсем.
ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Таджик ССРеспубликинчи колхоз председателĕсем—ССРС Аслă Совечĕн Национальнăçсен Совечĕн депутачĕсем. Сулахайран сылтăмала—Шарипова Гангар („Байраки-Сурх“ колхоз), Халматов Мирзоахмет (Майăн 1-мĕш йачĕпе тăракан колхоз), Кучаров Турсун (МТС йачĕпе тăракан колхоз), Раджабов Али (Мартăн 8-мĕш йачĕпе тăракан колхоз).
Б. Фишман фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото).

МТС директорĕ тракторсене йусассипе интересленмест

ПАТĂРЙЕЛ, йанварĕн 14-мĕшĕ (телефонпа, хамăр корр.). МТС-ăн çуракине хатĕрленнĕ май 56 трактор йусамала. Ку шутран йанварĕн 1-мĕшне 15 трактор çеç йусанă. Тӳррипех каламала, районра тракторсене йусас ĕç калама çук ӳрĕк-сӳрĕк пулса пырать.

Парти Чăваш обкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă план-график тăрăх йанвар уйăхĕн 1-мĕш декадинче Патăрйел МТС-ĕн 6 трактор йусамала пулнă пулсан, 3 трактор кăна йусанă. Иккĕмĕш декадăра ĕç татах вăраклănни палăрать, йанварĕн 14-мĕшне пĕр трактор çеç йусанă. График тăрăх 7 трактор йусамала, вĕсенчен „ЧТЗ“ маркăлине пĕр трактор, пĕтĕмĕшпе 6 декадăра 42 трактор йусамала.

Анчах тракторсене йусас ĕç пайанхи пек ӳрĕк-сӳрĕкĕн пырсан график арканасси халех курăнать. Тарктосене йусанин пахалăхĕ начар. Пĕре йусанă моторсене тĕрĕсленĕ хыççăн, тепĕр хут йусамала пулнă.

Çавнашкалах МТС-ра ытти йалхуçалăх машинĕсене йусассине те тивĕçлипе организацилемен. Ремонт тăвакан рабочисем хушшинче ĕç десциплини çук.

Йанварĕн 13-мĕшĕнче моторсем йусакан бригадăн механикĕ Йершов хăйĕн бригадинчи 6 рабочине тата тракторсен ытти пайĕсене йусакан бригадăн механикĕ Пайманов 3 рабочине йавăçтарса 2 кун „выходной“ туса йатернĕ.

Çавнашкалах трактор плугисене те 17 çеç йусанă. 8 культиватортан пĕрне те йусаман. Кунта тракторсемпе плугсене кирлĕ пайсем çитмеççĕ. Вĕсене тупассине аса та илмеççĕ.

Çунтармали йапаласене çителĕклĕ таран хатĕрлемен. Халĕ 53,2 тонна çеç кӳрсе килнĕ. Тата мĕн чул кирлине МТС-ра ĕçлекенсем пĕлмеççĕ.

МТС çапла ӳрĕк-сӳрĕк ĕçлесе пырсан, çитес çуракинче пысăк чăрмавсем пуласси курăнсах тăрать. Кĕске вăхăтрах татăклă улшăнусем пулмала.

Н. Пушкин.

Ĕнелĕ пулчĕç

СĔНТĔРВĂРРИ. 1937 çулхи йанварĕн 1-мĕшне районра ĕнесĕр хуçалăхсем нумай пулнă. 1938 çулхи йанварĕн 1-мĕшне 488 хуçалăх ĕне туйанна. Çĕнĕ çул тĕлне Вăта Пукашра 6 хуçалăха, Услă Пукашра—6, Иштерекассинче—3, Амачкинăра—7, Йуртакассинче—6, Малти Чиперуйĕнче 5 хуçалăх ĕнелĕ пулчĕç.

В. В.

Типографинчи стахановецсем

Шупашкарти 1-мĕш №-лĕ типографинчи рабочисем хушшинче стахановла йухăм сарăлсах пырать. Йулашки вăхăтра рабочисем хăйсен нормисене ытлашшипех тултарса ĕçлеме пуçларĕç. Печатник Титов, накладчиксем Семеновпа Шчербаков йулташсем кулленхи нормăсене 193—213 процент таран тултарса ĕçлеççĕ. Печатницă Пономарйовăпа накладчица Фролова йулташсем те вĕсенчен йулмаççĕ. Вĕсем те хăйсен кулленхи ĕç нормисене 180—190 процент таран тултарса ĕçлеççĕ.

Е. Йамашев.

50 процент тултарнă

ШĂХАСАН. Кăшнаруйĕнчи „Прожектор“ колхоз кăçалхи çул вăрман хатĕрлес плана 50 процент тултарчĕ. Вăрман хатĕрлес ĕçре колхозниксем тăрăшса ĕçлеççĕ. Уйрăмăнах вăрманта 4-мĕш бригадăри Йакимовпа Краснова колхозниксем стахановла ĕçлеççĕ.

Колхозниксем вăрман касса хатĕрлес плана çак кунсенче 100 процентпех тултарассишĕн кĕрешеççĕ.

Л. Шаков.

Прокурор Чижов тата унăн „помошникĕсем“

Чижов иккĕмĕш çул Шăхасан районĕнче прокурор пулса ĕçлет. Унăн ĕçĕсене илсе пăхсан, тӳрех çапла калас пулать:

Вăл хăйĕн професçине пысăк кăмăлпа суйласа илнĕ. „Прокурор пĕчĕк чин мар, унта хамшăн усă тума пулать“—тенĕ вăл. Анчах вăл ку ĕçе ăнсăртран çеç лекнĕ.

Чижов ĕçе тăшманла туса пынă. Вăл совет çирĕп саккунĕсене пăснисене хирĕç кĕрешмен. Совет саккунне пăсакан пысăк преступниксен ĕçĕсене пĕтере-пĕтере лартнă.

1936—37 вĕренӳ çулĕнче Ăвăспӳрт Кипечре вăтам шкулта хăшпĕр учителсен пысăк ирсĕр ĕçне палăртрĕç. Воронцов учител пĕрмайах ĕçнĕ. Уроксене ӳсĕр çӳренĕ, улахсене чупнă. Иванова хĕрачапа пурăнса ăна йăвăр çын тăвать, унтан мăшкăлать, вара Иванова хăйне хăй вĕлерет. Çав Воронцов ĕçĕ прокурор Чижов патне çитет те, пĕтсе ларать. Парти райкомĕ хутшăннипе çеç ку ĕçе тепĕр хут пуçласа йарса, Воронцова суд умне тăратаççĕ.

Çав шкултах Йаковлев Федор учител те ачасене хĕненĕ. Уншăн ăна комсомолтан кăларчĕç, аттестаци комиççийĕ учителре ĕçлемеле мар турĕ. Судпа айăплама ĕç пуçласа йарсан, прокурор Чижов пĕтерсе лартрĕ. Çавна пула Йаковлев Ф. пайан кун та Чăвашсен пединститутĕнче вĕренет.

Шĕкĕрти колхоз председателне, Чижов пек ăнсăртран, кулак Кириллов кĕрсе ларать. Нумай ирсĕр ĕçсем тăвать вăл унта. Колхозниксене тыра памасăр усранă, тăшманла сăмахсемпе кăшкăрса çӳренĕ, колхоз пурлăхне салатнă.

Кириллова ĕçрен кăларса судпа айăплама тусан, унăн ĕçĕ Чижов патне çитет-те, пĕтсе ларать. Пĕтермесен те май çук, Кириллов колхоз председателĕнче ĕçленĕ чухне Чижова икĕ лав улăм укçасăрах панă.

Чижов хăйне манакан çын мар, вăл илмесĕрех тăмаст, хăш чухне „саккун тăрăх“ вăйпа та илет. Ку ĕçре унăн çирĕп помошникĕсем—арăмĕпе секретарĕ пур.

Чижовсене ĕне кирлĕ пулнă. Пасара лайăххисене илсе тухмаççĕ, тата хаклă ыйтаççĕ. Анчах вĕсем ĕне илмели урăх май тупаççĕ.

Прокуратурă секретарĕ Петров Шĕкĕрте пĕр йединоличник ĕнине тупса парать. Чижова унта вĕçтерет, ĕне килĕшет. Вăл каллех йалсоветне кайать те председателне калать:

„Епĕ прокурор арăмĕ. Чижова. Сирĕн йединоличник Чернов укçа парăмсене татман. Халех унăн ĕнине торгипе сутмала. Торгире ĕнине Йаковлев илет“ тет вăл.

Каланă, пулнă, йединоличник Чернов ĕни йумахри пекех Чижов патне пырса та тăнă.

ПСК(б)П Шăхасан райкомĕ Чижов ĕçне пăхса тухса, ăна ĕçрен кăларасси çинчен ыйту лартрĕ, анчах партинчех хăварчĕ. Райком йăнăшнă. Чижовра коммунисăн сăпачĕ кăшт та çук, вăл парти ретĕнче пулма пултараймасть.

С. Соколов.

Вăрлăх суртлас ĕçе çăмăллатрĕç

Йетĕрне районĕнчи Пушнар колхозĕ 1938 çулхи çуракине вăйлăн хатĕрлеме тытăнчĕ. Чи малтанах кунта вăрлăхсене суртласа тасатас ĕçе тытăнчĕç. Вăрлăх суртламали машинăсем—трийерсем алăпа ĕçлемелисем.

Çавăн пирки ĕç тухăçлăхĕ сахал пулать тата çын вăйĕ те нумай кирлĕ. Пушнар колхозникĕсем трийера урăхла майпа ĕçлеттереççĕ. Вĕсем молотилкă приводне пĕр лаша кӳлсе трийера приводпа ĕçлемеле туса майлаштарнă. Ĕçе çапла организиленипе трийер пĕрмайах пĕр пек ĕçлесе тăрать, трийĕр алăпа çаврнинчен кунне ик-виç хут ытларах вăрлăх тасатса кăларать. Çак опыта ытти колхозсене те кусармала.

В. Павлов.

ÇЕНЕ ВИТЕ

Калукассинчи „Пĕрлешӳ“ колхозра (Сĕнтĕрвăрри р.) сысна таварлă ферминче кăçалччен сысна çурисем валли уйрăм ăшă вите пулман. Çак кунсенче çеç йатарласах сысна çурисене хупма ăшă вите турĕç. В. Йамуков, И. Иванова, К. Коротков йулташсем сыснасене йуратса пăхаççĕ.

В. В.

Депутат—халăх тарçи

Совет халăхĕ суйланă депутатсем Мускава пухăнчĕç. Йанварĕн 12-мĕшĕнче ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн пĕрремĕш çессийĕ уçăлчĕ. Социалисăм çĕршывĕн чи лайăх çыннисем Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузĕн государствăлă пысăк ыйтусене пăхса тухса татса параççĕ. Етемлĕх историйĕнче халиччен пулман парламент ĕçе тытăнчĕ. Çак парламент хăйĕн ĕçне совет халăхĕ хăйĕн тăван çĕршывне виçесĕр йуратнă тапхăрта тăвать.

Мускавра та, Минскра та, Мурмăнскра та, çӳллĕ Памир сăртĕнче те, Инçет-Хĕвелтухăçĕнче те—пур çĕрте те рабочисемпе колхозниксем çессине кайакан депутатсене хĕрӳлĕн ăсатса йачĕç. Пур çĕрте, пур халăх чĕлхипе тĕнчери чи демократилĕ Конституци туса паракан аслă çулпуçа, учителе, Сталин йулташа, саламларĕç. Депутатсем Хĕрлĕ столица пуçтарăнчĕç. Ĕççыннисем хăйсен пĕтĕм вăйне пухса çĕнĕ çĕнтерӳсен çĕнĕ çулĕн, 1938 çулăн задачисене пурнăçа кĕртессишĕн ĕçлеме тытăнчĕç. Ĕççынни массисем ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн пĕрремĕш çессине производствăра çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе, социалисăмла ăмăртун çĕнĕ хумне çĕкленипе, стахановла çĕнĕ рекордсем тунипе кĕтсе илчĕç. Халăх хăй суйласа йанă депутатсене çапла калать: ĕçлемеле, Сталин йулташ пек ĕçлемеле.

1937 çулти декабĕрĕн 11-мĕшĕнчи кас—ССР Сойузĕн Аслă Совечне суйлас кун умĕнхи каçа ĕççыннисем йаланах асра тытĕç. Çак кас Совет Сойузĕ Сталин йулташăн хĕрӳлĕ, çулăмлă сăмахне савăнса итлерĕ. Сталин йулташ ун чухне çапла каланă:

„Депутат çакна пĕлме тивĕç: вăл халăх тарçи. Аслă Совета халăх йанă посланец, унăн хăйне халăх панă наказ тăрăх тытмала“.

Халăх тарçи! Çак йатран хисеплĕ те аслă йат урăх мĕн пулма пултартăр? Буржуалă çĕршывсенче влаç капиталиссен пĕчĕк ушкăнĕ аллинче тăрать, унта парламент ытти тултарнă михĕн тарçи пулса тăрать. Фашисла çĕршывсем ун пек парламента та пĕтернĕ, йе ăна мăшкăламали йапала туса хунă. Государствăна тытса тăрас ĕçре шултра банксемпе трестсем лартнă авантӳриссемпе çапкаланса çӳрекенсем, пĕтсе пыракан експлоататăрлă классен реакцилĕ представителĕсем тăраççĕ. Пирĕн експлоатацине тĕпĕпех пĕтернĕ çĕршывра çеç суйлавçăсен ирĕклĕхне никам та пăсма пултараймасть. Пирĕн социалисăм пурнăç йалине кĕрсе вырнаçнă çĕршывра çеç депутат чăннипех халăх посланецĕ, халăх хушнă ĕçе тăвакан пулать.

ССР Сойузĕн Аслă Советĕнче пирĕн çĕршывра пурăнакан пур нацисен представителĕсем те пĕр тан правалă. Совет парламенчĕн членĕсен пĕр-пĕрне хирĕçле интерессем çук, пулма та пултараймаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсене суйланă ССР Сойузĕнчи рабочисен, хресченсен, совет интеллигенцин интересĕ пĕрре.

Чăннипех халăх представителĕ пулмала тени, вăл—ленинла сталинла çирĕп политикăла дейател пулмалине пĕлтерет. Çакăн пек дейател—политикă тата морал тĕлĕшĕнчĕн те таса пулмала, çакăн пек дейател—пур йенчен те таса, ĕçе пĕлсе тăракан, тутăхпа вараланман, политикă тĕлĕшĕнчен таса, çирĕп пулмала. Вăл—таса та тĕрĕс. Вăл хăйĕн халăхне, хăйĕн тăван çĕршывне чĕререн йуратать. Унăн халăх ырлăхĕшĕн, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн кĕрешмеле. Çакăнтан паха ĕç урăх çук. Вăл çапă çура хăрамаст, халăх тăшманĕсене нимĕн шеллемесĕр пĕтерет, лару-тăру йăвăрлансан, йăвăрлăх сиксе тухсан, вăл нимĕн те шикленсе ӳкмест, хăйне çирĕп тытать. Халăх шаннă кашни депутатăн, çынăн Ленин пек, Сталин пек пулма ĕмĕтленмеле, тăрăшмала.

Çапла сталинла наказ. Çак наказпа карĕç 90 мĕлйун суйлавçă суйлав урнисем патне. Çак наказпа вĕсем коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блок кандидачĕсемшĕн сасăларĕç. Халăх хăйĕн лайăх çыннисене, хăй суйланă депутатсене чĕререн йуратать. Халăх шаннине хаклама вĕрентет пире Сталин йулташ:

„Руководителсем килеççĕ те кайаççĕ, а халăх йулать. Халăх çеç вилĕмсĕр. Ыттисем пурте—улшăнса пыракансем. Çавăнпа та халăх шаннине хаклама пĕлмеле.“

Совет халăхĕ хăйĕн ирĕклĕхне тĕнчери чи демократилĕ суйлавра йăр уççăн палăртрĕ. Çак ирĕклĕх пите паллă: коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсем сасăласа, халăх Ленин—Сталин партишĕн, Сталинла Тĕп Комитетшăн, Совет правителствишĕн сасăларĕ.

Халăх шаннине тĕрĕсе кăлармала—çакă ĕнтĕ ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн кашни депутатне тивĕçлĕ пулнă хисеплĕ ĕç, çакă ĕнтĕ кашни депутат умĕнче тăракан пысăк задачă. ССР Сойузĕн государствă аслă органне суйланă пирĕн тăван çĕршывăн чи лайăх çыннисем çак задачăна пурнăçа мĕнле кĕртмелине лайăх пĕлеççĕ. Вĕсем сталинла наказа пурнăçа мĕнле кĕртмелине, Сталин йулташăн тивĕçлĕ вĕренекенĕ мĕнле пулмалине пĕлеççĕ. Политикăла ыйтусене сӳтсе-йавса татса панă чухне, государствă ĕçĕсене тунă чухне, вĕсем Ленин—Сталин парти çулĕпе кайаççĕ, халăх тăшманĕсене хирĕç хăйаррăн кĕрешеççĕ, сыхă пулаççĕ, пысăк ыйтусене сӳтсе-йавса татса панă чухне васкамаççĕ, ĕç çине тимлĕн пăхаççĕ.

Социалисăм çĕнтерӳвĕсем пит те пысăк, анчах кĕрешӳ пĕтмен-ха. Депутатсен—халăх тарçисен Сталин йулташ революцилĕ сыхăлăх çинчен кăтартса панине асра тытмала. Троцкисла-бухаринла мерзавецсене, шпионла, диверçилĕ-сăтăрлă, ĕççыннисен нумай мĕлйунлă массисен вăйĕпе тунă социалисăмăн чаплă çуртне усал ĕç тунипе ишсе антарма хăтланакан фашисăм агенчĕсене нимĕн те хĕрхенмеле мар.

Суйлавçăсем умĕнче отчот тумала. Анчах отчотсене йатшăн çеç тумала мар. Большевиксен сăмахĕ нихăçан та ĕçрен уйăрăлса тăмаст. Пур депутатсен те—вĕсем колхоз уйхирĕсенче, стахановла станок умĕнче, йе аслăлăх учрежденисенче ĕçлеççĕ-и, учреждени йе парти организацисен руководителĕсем-и, пурин те суйлавçăсем умĕнче отчот тытмала.

„Рабочисемпе хресченсен телейĕшĕн, вĕсен ĕçĕпе пурнăçĕшĕн пурнăçа пама хатĕр. Партипе правителствă чĕнсенех тăван çĕршыва сыхлама тăратăп, çак ĕçшĕн, Сталиншăн пĕтĕм вăйа паратăп“ тесе калать ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн депутачĕ, Н-ски çарĕнчи боец Т.А. Крӳков йулташ.

Хура тинĕс çинчи подводниксем Р. Н. Замйатин депутата çессине ăсатса йанă чухне, тăшман ССР Сойузĕ çине тапăннине отпор пама краснофлотецсем хатĕр тăраççĕ тесе çессине шантарса сăмах пама хушса йанă. Пирĕн Рабочисемпе Хресченсен мухтавлă Хĕрлĕ Çарĕ, Хĕрлĕ Флот çак сăмахпа пĕр шухăшлă, пĕтĕм совет халăхĕ пĕр шухăшлă.

Рабочисемпе хресченсен социалисăмла государствин аслă органĕ нумай нацилĕ совет халăхĕнчен тухнă çынсенчен тăрать. Вĕсем рабочисенчен, хресченсенчен, интеллигенци хушшинчен тухнă. Вĕсем буржуазипе помещиксен влаçĕ чухне массăпа пĕрле йăварлăх курнăскерсем, çĕнĕ, телейлĕ пурнăшăн паттăр кĕрешӳре пиçнĕскерсем. Вĕсен хушшинче сталинла телейлĕ саманара ӳссе çитĕннĕ çамраксем. Массăпа пĕрле пурăнмала, унпа тачă çыхăну тытмала,—çак вăл депутатсем хăйсен ĕçĕсене ăнăçулă туса пымали тĕп май.

Шупашкарти почта çинчен

Кăм ĕнентĕрха Сĕнтĕрвăрринчен Шупашкара çыру пĕр кунта çитсен, Шупашкар почтинчен Слесарнăй оврăг урамне 3 кун хушши кайать тесен? Никам та ĕненмĕ. Анчах почтăри бӳрократсен айăпĕпе час-часах çапла пулать. Сăмахран, хамах илетĕп. Епе „Пищевая индустрия“ хаçата çырăнса илетĕп. Уйăх хушшинче те 5 номĕр çеç пырса пачĕç. Чылайах пăшăрхантарать. Çитменне тата почтă кашни кун пырас вырăнне, 2—3 кунта çеç пырать.

Телефон станцинче те çав майлах. Унта ĕçлекен телефонисткăсем чупкаласа çеç çӳреççĕ. Айакри йалпа йе хулапа калаçас пулсан нумай кĕтсе ларма лекет.

Шупашкар почтинче ĕçлекенсене кирлĕ пек ĕçлеме тытăнма вăхăт. Ĕçре йури чăрмантарса пыракансене тасатмала.

М. Захаров

23 çын вĕренсе тухрĕç

ШĂХАСАН. 1917—18-мĕш çулсенче çуралнă çамрăксем хушшинчи хутла сахал пĕлекен допризывниксене вĕрентме Шăхасанти вăтам шкул çумĕнче шкул организацилерĕçче. Вăл шкулта 55 допризывник вĕренчĕç.

Çак кунсенче 23 çын вĕренсе тухрĕ. Ыттисене те çывăх вăхăтрах вĕрентсе кăлараççĕ. Допризывниксене вĕрентес çĕрте Сергейев учител тăрăшса ĕçлерĕ.

Дм. Шалкас.

* Вĕренӳ çулĕ пуçланнăранпах Шупашкарти коопетехникум çумĕнче ПВХО, ГТО кружокĕсем ĕçлеççĕ.

Йанварĕн 13-мĕшĕ тĕлне ПВХО значокне 54 студент, ГСО значокне 26 студент илчĕç. Е. Йегоров.

Чăваш АСС Республикин 1937 çулти вырăнти бюджетсене пурнăçа кĕртнин çулталăк отчочĕсем çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ—республик халăх хуçалăхĕн хоçайствăлă тата социалă-культурăлă ĕçĕсене тума укçа-тенкĕ парса пынине колхозниксемпе йединоличниксен, рабочисен, инженерла-техникла работниксен, служăшчисен пысăк массисем хушшинче сÿтсе-йавса итог туни хуçалăхпа политик тĕлĕшĕпе пысăк вырăн йышăнса тăрать, тесе шутлать.

Республик бюджечĕсене пурнăçа кĕртни тăрăх ирттерекен отчотлă кампанине, хуçалăхпа политиклă кампани пек организацилемеле, çапла тунипе пĕтĕм ĕçсынни массисене иртнĕ стахановла çулталăкăн итогĕсене, халăх хуçалăхĕ вăйланнипе, ĕçсынни массисен пурнăçĕ лайăхланнипе бюджет та пысăккăн ÿснине кăтартса памала.

Отчотсене сÿтсе-йавнă чухне финанспа бюджет дисциплинишĕн лайăх кĕрешнин тĕслĕхĕсене кăтартмала, çавăнпа пĕрлех критикăпа самокритикăна сарса пынă никĕс çинче, вăл дисциплинăна пăснисем пулнине: укçа-тенкĕне вырăнсăр салатса, вăрласа пĕтерниcем пулнине, тытăм аппарачĕсенче ытлашши расхут кăларнисем пулнине палăртмала, çапла майпа финанс фронтĕнче пулнă сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес, финанс аппарачĕсене тăшманла тата пăсăлса кайнă елементсенчен, политикă йенчен шанчăксăра тухнă çынсенчен тасатас ĕçре партипе правителствăна пулăшмала.

Отчотлă кампани ирттерес ĕçе лайăх организацисенĕ тăрăх ĕççыннисен анлă массине 1938 çулти финанс планне вăхăтра тултарассишĕн кĕрешме мобилизацилемеле.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Финанс халăх комиссариатне, райĕçтăвкомсене, районсенчи тата хуласенчи финанс пай пуçлăхĕсене, йалсоветсене тата хула совечĕсене 1936 çулхи йăнăшсене тепĕр хут тăвассинчен асăрхаттарать, ун чухне бюджетсене пурнăçа кĕртни çинчен иртнĕ отчотлă кампанийе хăй тĕллĕн пулса пырасси çине хунăччĕ, çавна пула вăл техникăла хĕсĕк ĕç пек çеç иртнĕ.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнать:

1. Финанс халăх комиссариатне тата райĕçтăвкомсене бюджетсене пурнăçа кĕртни çинчен отчотлă кампани ирттерессипе йалсоветсене тата районсене пулăшма ответлă работниксене уйăрса йама хушас.

2. Райĕçтăвкомсене хушас:

а) 1938 çулти йанварĕн 20-мĕшĕ тĕлне йалсовет председателĕн доклачĕ, ревизи комиççи председателĕн содоклачĕ, районти финанс пай пуçлăхĕ çирĕплетнĕ тăрăх йал бюджетсене пурнăçа кĕртни çинчен (кашнине уйрăммăн) çулталăкри отчотсене çирĕплетмеле;

б) 1938 çулти йанварĕн 22-мĕшĕнчен 28-мĕшне çитиччен райĕçтăвком пленумĕсенче, районти финанс пай пуçлăхĕн доклачĕ тăрăх, район бюджета пурнăçланине тата районти пур бюджетсем тăрăх тунă сводкăла отчотсене çирĕплетмеле, вĕсене кăтартнă сруксенче Финанс халăх комиссариатне тăратмала. (Хушса кăларнине пăх).

3. Хула совечĕсене хушас: Улатăр хула совечĕн 1938 çулти йанварĕн 17-мĕшне, Шупашкар хула Совечĕн 1938 ç. йанварĕн 29-мĕшне, Хулари финанс пайĕн пуçлăхĕн доклачĕ тăрăх Хула совечĕсен пленумĕсенче хула бюджечĕсене пурнăçа кăртнине çирĕплетмеле, вĕсене палăртнă сруксенче Финанс халăх комиссариатне тăратмала (хушса кăларнине пăх).

4. Райĕçтăвкомсемпе Хула совечĕсене хушас:

а) йал бюджечĕсене пурнăçлани çинчен йалсоветсен аслă пленумĕсенче, колхозниксемпе йединоличниксен пĕрлехи пухувĕсенче сÿтсе-йавма;

б) хула бюджечĕсене пурнăçлани çинчен Хула совечĕсен аслă пленумĕсенче тата хула совет пленумĕн тухса çÿрекен ларăвĕсенче сÿтсе-йавма; ку ĕçе фабриксемпе заводсенчи рабочисемпе служăшчисене хутшăнтармала;

в) районсенчи бюджетсене райĕçтăвком президиумĕн тухса çÿрекен ларăвĕсенче, пысăк колхозсене тухса, пĕтĕм финанс активне йавăçтарса, сÿтсе йавмала.

5. Халăх комиссариачĕсемпе тĕпри организацисен отчотсене, пĕтĕм хушса кăларнисемпе пĕрле, 1938 çулти йанварĕн 17-мĕшĕнчен кайа йулмасăр Чăваш АССР Финанс халăх комиссариатне тăратма хушас.

6. Финанс халăх комиссариатне республикри 1937 çулти бюджета пурнăçа кĕртни çинчен тунă отчота февралĕн 10-мĕшĕ тĕлне, республик тăрăх тунă сводкăла отчота 1938 çулти мартăн 1-мĕшĕ тĕлне çирĕплетме Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Советне тăратма хушас.

7. Райĕçтăвкомсене çак постановлени тăрăх 1937 çулти вырăнти бюджетсене пурнăçа кĕртни çинчен çулталăкри отчотсене тăвас ĕçе пурнăçлама май паракан постановлени кăларма хушас.

8. Çулталăкри отчотсем тунă вăхăтра çулталăкри отчотсене тунă çĕрте ĕçлекен бухгалтерсене тата бюджет работникĕсене çулталăкри отчотсене тăвассипе çыхăнман урăх ĕçсене йамала мар тăвас.

9. 1937 çулти вырăнти бюджетсене пурнăçа кĕртни çинчен отчотсем тăрагасси çинчен çак постановлени çумне хушса кăларнă сруксене çирĕплетес.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕ Ф. Матвейев

Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçĕсене пăхаканĕ И. Жуков.

Шупашкар хули, 1938 çул, йанварĕн 7-мĕшĕ.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулхи йанварĕн 7-мĕшĕнче йышăннă постановлени çумне хушса кăларни

Чăваш АСС Республикин 1937 çулти вырăнти бюджетсене пурнăçа кĕртни çинчен отчотсем тăратмали

СРУКСЕМ

Администрацилĕ еденицăсен йачĕсем	Чăваш АССР Финанс халăх комиссариатне отчотсем (хушса кăларнисемпе пĕрле) тăратмали сруксем	Асăрхаттарни
Улатăр—хула бюджечĕ тăрăх	1938 ç. йанварĕн 19-мĕшĕ	Хулари финанс пайĕ тăратать
Пăрачкав—район тата йал бюджечĕсем тăрăх пĕтĕм районĕпе	1938 ç. йанварĕн 25-мĕшĕ	Районри финанс пайĕ тăратать
Патăрйел „ „	„ „	„
Куславка „ „	„ „	„
Тăвай „ „	„ „	„
Улатăр „ „	„ „	„
Елĕк „ „	„ „	„
Вăрнар „ „	„ „	„
Йĕпреç „ „	„ „	„
Кувакинă „ „	„ „	„
Тутаркас „ „	„ „	„
Трак „ „	„ „	„
Шупашкар р-нĕ „ „	„ „	„
Шăмăршă „ „	„ „	„
Шăхасан „ „	„ „	„
Сĕнтĕрвăрри — район, хула тата йалсен бюджечĕсем тăрăх пĕтĕм районĕпе	„ „	Хула бюджечĕ тăрăх тунă отчота Хула советĕнчен районри финанс пайĕ илет, кайран ЧАССР Финанс халăх комиссариатне сводкăлă майпа тăратать
Çĕрпÿ „ „	„ „	„
Йетĕрне „ „	„ „	„
Канаш—район, хула тата йалсен бюджечĕсем тăрăх пĕтĕм районĕпе	„ „	Хула бюджечĕ тăрăх тунă отчота Хула советĕнчен районти финанс пайĕ илет, кайран ЧАССР Финанс халăх комиссариатне сводкăлă майпа тăратать.
Çĕмĕрле „ „	„ „	„
Шупашкар—хула бюджечĕ тăрăх	„ „	Отчота хулари финанс пайĕ тăратать
Ишлей — район, йалсен бюджечĕсем тăрăх пĕтĕм районĕпе	„ „	Отчота районри финанс пайĕ тăртаать.
Хĕрлĕ Чутай „ „	„ „	„
Вăрмар „ „	„ „	„
Турхан „ „	„ „	„
Шăнкăртам „ „	„ „	„
Йелчĕк „ „	„ „	„

Йутçĕршывсенчи пичет Аслă Совет Çеççийĕ çинчен мĕн çырать

БАРСЕЛОНА, 12/I (ТАСС). „Френте Рохо“ хаçат „Пĕтĕм тĕнчери событи“ йатлă умстатйара çапла çырать: „Пайанхи кун ĕнтĕ Сталинла Конституци вăл пурнăçра пурри—советлă социалисăмлă демократин чĕрĕ те ĕçлĕ практики. Çĕнĕ йĕрке, çĕнĕ пурнăç тунă, ытамласа илме çук анлă çĕршывăн социалисăм строителстви историнче пайанхи кун йаланлăха асра йулать Аслă халăхăн представителĕсем—ирĕклĕ те телейлĕ совет гражданĕсем ирĕклĕ те ыра условисенче суйланă представителсем пайанхи кун пирвайхи хут ССР Сойузĕн Аслă Совет Çеççине пухăнаççĕ“.

ССР Сойузĕнчи суйлавсем пĕтĕм тĕнчери рабочисен, пĕтĕм тĕнчери халăхсен çĕнтерÿвĕ пулчĕç, тесе çырать малала хаçат.—Пайанхи кун çав çĕнтерÿ ĕçе кĕрет. Сталинла депутатсен пĕрремĕш заседанийĕ, Испани халăхĕ те çавăншăн кĕрешекен, културăпа мирăн çĕнтерÿвĕ, чăн-чăн демократин çĕнтерÿвĕ пулса тăрать.

***

ПРАГА (ТАСС). Прагăри (Чехословаки) пур хаçатсем те пайан ССР Сойузĕн Аслă Совет Çеççийĕ уçăлнине паллă тăваççĕ. Хаçатсем анлă та аслă Совет Сойузĕн пур кĕтесĕсенчен те совет парламенчĕн депутачĕсем, ĕççыннисен йышлă массисем шанса суйланă çынсем пуханни çинчен тĕплĕ информаци пичетлеççĕ. Чылай хаçатсем Аслă Совет Çеççийĕ уçăлнă йатпа пысăк статйасем пичетлесе кăларнă.

„Руде право“ хаçат „Аслă Совет хăйĕн ĕçне тума тытăннă“ йатлă умстатйара — совет парламенчĕ пĕтĕм тĕнчешĕн социалисăмлă чăн-чăн демократин образецĕ пулса тăрать, тесе калать. Хаçат çапла çырать: „Совет парламенчĕ совет халăхĕн моралĕ тата политикăлă пĕрлĕхне—совет çĕршывĕнчи рабочисен, хресченсен, интеллигенцин пĕрлĕхне палăртса тăрать“. ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Çеççине пухнин политикăлă пахалăхне палăртса, хаçат калать: „Çеççи, нумай нацилĕ совет халăхĕн пĕрлĕхĕ çине тайанса тăракан ССР Сойузĕ çав тери хăватлă фактăр пулса тăнине тата тепĕр хут пĕтĕм тĕнче умĕнче кăтартса парĕ“.

Йапон-манчжур влаçĕсем совет самолочĕ пирки саккунсăр хăтланни

ХАБАРОВСК, йанварĕн 13-мĕш. (ТАСС). Кунта çакăн пек сведенисем илнĕ: ССР Сойузĕн Харбинри Генералнăй Консулствипе Токиори полпредстви пĕр хут çеç мар ыйтнине пăхмасăрах, Манчжури территори çине ирĕксĕр анса ларнă совет самолотне Йапон-манчжур влаçĕсем хал те кайала тавăрса памаççĕ, епĕр малтан пĕлтернĕ пек, вăл самолот—гражданла авиацин Владивосток—Хабаровск лини çинче почта çÿретекен самолочĕ пулнă, декаберĕн 19-мĕшĕнче Хабаровска кайма вĕççе тухнă та, çухалса кайнипе, ирĕксĕрех Манчжури территори çине анса ларнă.

Совет самолочĕ Манчжури территори çине ларнă факта Йапон-манчжур влаçĕсем малтанах нумай вăхăт хушши нимĕн те пĕлмен пек туса пурăнчĕç, унтан, çав факта йышăнса, вĕсем хăйсен пуçĕнчен шухăшласа кăларнă тĕрлĕрен сăлтавсемпе самолот ăçта ларнине пĕлтермесĕр пурăнчĕç. ун çинчен ку таринччĕнех пĕлтермесĕр тăраççĕ.

Çав вăхăтрах почтă çÿретекен самолот ĕлĕкхи Хĕвелтухăç—Китай чукунçулĕн хĕвелтухăçри лининче Гаолинцзы станци районне ирĕксĕр анса ларни уççăнах паллă ĕнтĕ, тата Гусаров лотчикпе унăн помошникне çийĕнчех конвойпа Харбина илсе кайнă, вĕсене халхи вăхăтра та унтах тытса усраççĕ. Самолот çинче темиçе почтă михисенче гражданла ахал почтă пиртĕ нумай пулнă, унта çырусем тата почтăпа йаракан йапаласем 11 пин ытла пулнă. Самолота йапонин çар çыннисем тытса чарни те тата пĕтĕм ĕçе йапонин Харбинри çар миççийĕ туса пыни те уççăнах паллă. Çапах та ку Токиори совет полпредствине Йапони правителстви: Йапони правителстви имĕш ку ĕçпе нихăш йенчен те çыхăнмасть, тесе калама тата Манчжоу-Го правителстви çине йăвантарма чăрмантармасть.

Йапон-манчжур влаçĕсем çак ĕçре хăйсене çакăн пек тытни вăл—цивилизацилĕ мĕн пур çĕршывсенче пурте йышăннă йĕркене çеç те мар, çавăн пекех тата çухалса кайнă самолотсемпе лотчиксене пĕр-пĕрне кайала парас тĕлĕшпе советпа Йапон-манчжур влаçĕсем хушшинче тунă практикăна та пăсать, Инçет-Хĕвелтухăçри общественнăçа хытă тарăхтарать. Почтăна тытса чарни вăл пĕтĕм тĕнчери çыхăнусенче халиччен илтмен хулиганла акт пулать.

Çаксене май кунта лотчика, самолота тата почтăна халех кайала илсе килес тĕлĕшпе пирĕн влаçсем кирлĕ ĕçсем туса ирттересси шанса калаçаççĕ.

Кутăн йе ăнланман пуçлăх

Нумай пулмасть, „Красная Чувашия“ хаçатра „Управление, которое не управляет“ йатлă статйа çапăнса тухнăччĕ. Çав статйара автăр Чăваш республикĕнчи Искусствă ĕçĕсен управленийĕ Искусствă организацийĕсене йертсе пырас тĕлĕшпе калама çук йапăх ĕçлени çинчен çырнăччĕ.

Çав статйара кăтартнисем пĕтĕмпех тĕрĕс, анчах ку статйа тухнă хыççăн та Искусствă ĕçĕсен Управленийĕн начальникĕн заместителĕ Г. Иванов ĕçе йĕркелес тĕлĕшпе нимĕн те тумасть. Йурийех темеле, кутăнла ĕçсем туса пырать. Пушă сămах çаптариччен тĕслĕхсем çине куçар.

Чăваш государствă академи театрĕнче халăх тăшманĕ Максимов-Кошкинский сăтăрла ĕçсем туса, чăваш театр искусствине ÿсме чăрмантарса пурăнни пурне те паллă. Кошкинскине тахçанах тăрă шыв çине кăларнă, анчах унăн чи активлă пулăшаканĕсем пулнă çынсем пайан кунччĕнех театрта вырăн йышăнса тăраççĕ. Акă Петровăпа Ургалкина илер. Вĕсем Кошкинскин агенчĕсем пулса пурăннă. Петрова артиссемпе чухне йури Кошкинскине хирĕçле каласам пек туса, артиссем Кошкинский çинчен мĕн шухăшланине пĕлсе çÿренĕ. Кайран вара Кошкинскийе каласа панă. Лешĕ хăйне хирĕç пыракан артиссене театртан кăларса йанă йе урăх майпа хĕстернĕ. Ургалкин артиста çавнашкалах. Кошкинскине театртан кăларса сирпĕтсен, вăл уншăн мĕнле агитаци сарнине артиссем лайăх пĕлеççĕ.

И. Молодова (кулак ывăлне) Кошкинскипе пĕр каварлă пулса пурăннăшăн академи театрĕнчен кăларса пăрахсан, Искусствă ĕçĕсен Управленийĕн начальникĕн заместителĕ Иванов ăна Сĕнтĕрвăрринчи колхоз театрне, колхоз театрĕн художествăлă руководителĕ туса йанă. Халăх творчествин çурчĕ Молодов куçарнă пйесăсене лартма йураманнине пĕле тăркачах, уйрăм кĕнеке туса кăларма хатĕрленĕ. Ку ĕнтĕ тăшман агенчĕсене пулăшу пани пулать, май килнĕ чухне вĕсем тата та лайăхрах сăтăрлама пултарччĕр тени пулать.

Тепĕр факт. Кăçал Чăваш театр артисĕсене театр маçтăрлăхне вĕрентес шутпа, уйăхне 2 пин тенкĕ парса, Мускавран Токмаков артиса илсе килчĕç. Токмаковран чăнахах та, вĕренме пулать-и, тен, анчах ернере икĕ хут сехетлĕ лекци вулани пирĕншĕн питех те çителĕксĕр. Ăна уйăхра 8 сехет лекци вуланăшăнах 2000 тенкĕ тÿлени—государствă укçине пĕр ответсăр шыва йама йуратакан çынăн йе халăх тăшманĕн ĕçĕ пулса тăрать, урăхла нийепле те ăнланма çук. Токмаков артиссемпе ĕçлес вăхăтра, театр училишчинче вĕрентсе ирттерет. Унта каллех уйрăм тÿлеççĕ. Пирĕн, çамрăк артиссен, вĕренес килет. Пире сценă ĕçне куллен кун вĕрентсе пыракан ăста çынсем кирлĕ.

Искусствă ĕçĕсен Управленийĕ çакна шута илмест. Вăл пирĕн художествăлă руководителе К. Иванов йулташа театр директорĕ туса лартса, пире художествăлă руководителсĕр тăратса хăварчĕ.

Театрăн йубилей кунĕ çывхарса килет. Хатĕрленÿ ĕçне йертсе пырас вырăнне, Искусствă ĕçĕсен Управленийĕн начальникĕн заместителĕ Г. Иванов аллине çеç сулать: „Хăвăр пĕлнĕ пек хатĕрленĕрех“,—тет. Вăл Чăваш республикĕнчи театрсене вăйлатасшăн мар, Пушкăрт республикĕнче чăваш театрĕ организацилен май, лайăх артиссене унта куçарма тăрăшать. Вăл кунтан лайăх отзыв парса йанипе политикла шанчăксăр Л. Агаков Пушкăрт республикĕнчи театрта художествăлă руководител пулса ĕçлет. Халĕ ăна кунти артиссене Пушкăрт республикне илсе кайма ирĕк панă.

Çапла майпа „ĕçлет“ Искусствă ĕçĕсен Управлени пуçлăхĕн заместителĕ Г. Иванов. Пĕлес килет, татах нумай ĕçлĕ-ши вăл капла?

АРТИСТ.

Ачасен йĕлтĕр станцийĕ

Шупашкар хулинчи ачасен йĕлтĕр станцинче 200 мăшăр йĕлтĕр пур. Вăл йĕлтĕрсене ачасене йаранма укçасăрах параççĕ. Шкулта вĕренекенсем, ушкăнăн-ушкăнăн, Атăл леш йенне йаранма кайаççĕ, йĕлтĕр походĕсем тăваççĕ, БГТО значокĕн нормисене параççĕ.

Шкул ачисем каникул вăхăтĕнче 900 ача ытла йĕлтĕрсем илсе йарăннă.

Анчах станци ăшĕнче вутă хутман пирки сивĕ. Тата 12 çунашкаран 7 çунашка йарăнма йурăхсăр. Йĕлтĕр станцин çак çитменлĕхсене пĕтермеле.

С. Воробйов

Румйанцева мĕншĕн ÿкĕнет

ПАТĂРЙЕЛ. (Хамăр корр.). Çак кунсенче йединоличницă Иевдокийа Румйанцева „Хĕрлĕ Туçа“ колхоза кĕчĕ. Вăл акă мĕн калать:

— Епĕ уйрăм хуçалăхпа пурăнса йăлăхрăм, унта пурнăç тума май çук, колхозра çеç пурнăç лайăххине ăнланса çитрĕм. Колхозниксем кăçал 700—900 пăт тырă илеççĕ. Вĕсен пурнăçĕ тулăх та савăнăçлă. Епĕ колхоза малтанах кĕменшĕн хытă ÿкĕнетĕп. Колхозра пулнă пулсан епĕ кăçал 400—500 пăт тырă илмелеччĕ, — тет.

Кĕскен

* СĔНТĔРВĂРРИ. Вăрман техникумĕнчи МОПР организацийĕ аванах ĕçлеме тытăнчĕ. Организацинче мĕн пурĕ 188 член шутланать. МОПР организацин ĕçĕпе унăн задачисем çинчен калаçусем туса ирттереççĕ. Йут патшалăхри рабочисемпе хресченсен йăвăр пурнăçĕпе паллашаççĕ, йамăр çĕршыв сыхлăхне çирĕплетессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

Н. Архипов.

* Чăвашсен 1-мĕш колхоз театрĕ декабĕр уйăхĕнче мĕн пурĕ 21 постановкă панă, вĕсене 6611 çын курнă. Колхозниксем уйрăмăнах „Пограничники“ пйесăна ырлаççĕ, малала та спектаклсемпе концертсем колхозсене тăтăшах тухса лартса пама ыйтаççĕ.

Театр коллективĕн планĕ тăрăх, йанвар уйăхĕнче 25 постановкă памала. Артиссем вăл плана тултарассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

М. Илйина.

* Шетмĕпуç йалсоветне кĕрекен Турханти „Çĕнĕ хунав“ колхозра хор кружокĕ организацилерĕç. Кружокра 45 çын. Пайанхи куна кружок членĕсем „Конноармейская“, „Песня о Сталине“, „Песня о Родине“, „Молодость“ т. ыт. йурăсене те вĕренсе çитрĕç.

А. Смирнов.

Преми памарĕç

Тискер кайăксене тытнăшăн премии параççĕ. 1937 çулти çентабĕр уйăхĕнче епĕ упа тытрăм. Çавăншăн мана 150 тенкĕ премии памала тунăччĕ. Преми укçине Госстрах управленинчен илмеле. Анчах та Чăваш республикинчи Госстрах управленийĕ ку тарана çитсе те премии укçине памасăр тытса тăрать. Темиçе хутчен те çыру çыртăм, хирĕç пĕр ответ та çук.

Тивĕçлĕ премийе хăçан парĕç-ши?

Игумнов Иван.

Вăрмар р., Шалти Пăртас йалĕ.

Извещение

15 января 1938 г. в 6 час. вечера в помещении Дома партпроса назначается совещание пропагандистов комсомольской политсети.

Явка аккуратная.

Горком ВЛКСМ.

Ответлă редактор заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Чăваш АССР Çыхăну Управленине

йалан ĕçлеме кирлĕ:

1. Йурист-консулт
2. Аслă бухгалтер
3. Бухгалтер—2 çын
4. Контролор—укçа куçарас йенĕпе ĕçлеме 2—çын
5. Економист-статистик
6. Машинистка (квалификацилĕ)
7. Економист
8. Уборшчица—1 çын
9. Курйер—1 çын.

Ĕçукçи государствă нормированийĕ тăрăх.

Çак адреспе пымала: Чăваш АССР, Çыхăну Управленийĕ. Иккĕмĕш хутлăх, 24 № пÿлĕм. Телефон №—0—41. Кадрсен уйрăмĕ. 3—3

Долгополянăри вăрманхими завочĕн сухăр-смала хатĕрлекен

Атратри кантурĕ

1937 çулта ĕçленĕшĕн ĕçукçи илеймесĕр йулнă рабочисене Атрать йалне укçа илме пыма чĕнет.

Срук—кăçалхи йанварĕн 15-мĕшĕччен.

3—2

Чăваш АСС Республикинчи пур МТС директорĕсене, районсенчи çĕрĕç пайĕсен пуçлăхĕсене тата колхоз председателĕсене

„Сойузоргучотăн“ Горькири уйрăмĕ çакна пĕлтерет: 1938 çулта малтанхи черетре учотсем çырмалли кĕнекесен комплекчĕсемпе бланксене çыранса илнĕ колхозсем патне кăçалхи йанварĕн иккĕмĕш çуруйăхлăхĕнче йараççĕ.

„Сойузоргучотăн“ Горькири уйрăмĕ.

2—2

АКАДЕМИ ТЕАТРЕНЧЕ

Йанварĕн 15-мĕшĕнче

Вырăсла спектакл

ШИЛЛЕР

„Коварство и любовь“

(4 пайлă прологлă)

Аслă режиççор Г. В. Странский лартать.

Художник Е. Н. Сапожников.

Талон № 82. Абонемент № 10. Талон №-8

Шупашкарти Коммуналă хуçалăх пайĕ

Атăл хĕрринчен хулана хăйăр турттарма подрйад парать.

Хăйăр турттарас текенсен Коммуналă хуçалăх пайне кĕрĕшме пымала.

Адрес: Шупашкар, К.-Маркс урамĕ № 1, (малтан Госбанк пулнă çурт).

Хулари Коммуналă хуçалăх пайĕ.

2—1

Шупашкарти Ремонтно-механически завода

Слесарсем-монтажниксем тата газпа шăратнă çĕрте ĕçлеме вĕренекен çамрăксем

КИРЛĔ

Кĕрес текенсен кирлĕ документсене пĕрле илсе çак адреспе пымала:

ШУПАШКАР, КАЛИНИН УРАМĔ, 70.

ТЕЛЕФОН № 0-77 тата 4-77.

2—2

Пур учрежденисене, организацисене тата предприйатисене

Производствăлă-техникăла тата строителствă валли кирлĕ материалсене кÿрсе тăратакан Чăвашсен Государствă предприйатине „ЧĂВАШСНАБСБЫТА“ тата унăн Шупашкарти, Çĕмĕрлери, Улатăрти, Канашри, Сĕнтĕрвăрринчи тата Йетĕрнери УЙРĂМĔСЕНЕ—РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 çулхи нойаберĕн 14-мĕшĕнче тата Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 çулхи декаберĕн 21-мĕшĕнче йышăннă постановленисем тăрăх—1938 çулхи йанварĕн 1-мĕшĕнчен пĕтернĕ. „Чăвашснабсбыт“ вырăнне „Росснабсбытăн“ Чăваш республикинчи уйрăмĕ организациленет. Адрес: Шупашкар хули, Хĕрлĕ площчĕ, 16. Телефонсем: № 1-60, 5-15, 1-13.

„Чăвашснабсбыт“ тăрăх претензисем пур пулсан 1938 ç. февралĕн 10-мĕшĕччен „Росснабсбытăн“ Чăваш республикинчи уйрăмне памала.

3—1

Пĕлтерÿ

1-мĕш №-лĕ типографин склачĕсенче (Шупашкар хули) нумай вăхăт хушши ĕнтĕ тĕрлĕрен государствăлă учрежденисем, обшчествăлă организацисем валли туса хатĕрленĕ заказсем выртаççĕ. Анчах, заказсем хатĕрри çинчен заказчиксене темиçе хут пĕлтернĕ пулсан та, вĕсем халиччен хăйсен заказĕсене пырса илмеççĕ.

Заказчиксене типографи çакна пĕлтерет: хатĕрленĕ пур заказсене те 1938 çулхи йанварĕн 16-мĕшне илсе каймасан, пур заказсене те кирлĕ мар хутсемпе пĕрле утиле кăларса пăрахать, штампсемпе пичетсене хăйсен йĕрки тăрăх пĕтереççĕ. Хатĕрленĕ заказсен хакĕсене заказчиксенчен нимĕне пăхса тăмасăрах шыраса илет.

Дирекци.

„Чăваш коммунĕ“ сырăнса илмелли хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 27. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2. Тираж 14.500 53—52 п. л. 1—1.